Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 декабĕр 14
Йункун
284 (5099) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Трактăрсене вăхăтра тата пахалăхлă йусассишĕн

Колхозсемпе машинă-трактăрлă станцисем кăçалхи йалхуçалăх çулне анăçлăн вĕçлессĕ. Хаљ ĕнтĕ çитес 1939 çулти çуракине хатĕрленес кĕрешӳ сарăлса пырать.

Çитес çулхи çуракине хатĕрленни, вăрлăхсем тата кадрсем хатĕрлени, трактăрсемпе комбайнсене, йалхуçалăхĕн ытти машинисене пысăк пахалăхпа йусани вăйлă тырпул туса илес çĕрте ĕçе татса паракан тĕп условисенчен пĕрисем пулса тăраççĕ. Машинăсене мĕнле йусанинчен çураки анăçлăхĕ те нумай килет.

Трактăрсене йусамали кампани пуçланни икĕ уйăх ытларах çитет ĕнтĕ. Апла пулсан та, пирĕн республикăра трактăрсене йусас ĕç ку вăхăтченех кирлĕ пек сарăлса пымасть. Чылай машинă-трактăрлă станцисенче ку ĕç пуçланмаипа пĕрех. Декабĕрĕн 1-ш тĕлне пĕтĕм республикĕпе трактăрсене тĕпренех йусамали тăваттăмĕш квартăл планне 20 процента йахăн, трактăрсене текущчи ремонт тумали плана—12,4 проц. çеç тултарнă. Вунă кун хушшинче — декабĕрĕн 10-мĕш тĕлне трактăрсене йусас ĕçре пысăк ăнăçусем тăвайман. Куславкка МТ Станцийĕ тăваттăмĕш квартăлта 3 трактăра тĕпренех йусамала пулнă пулсан, 2 трактăр, Кувакинă районĕнче 11 трактăртан 8 трактăр, Вăрнарта — 13 трактăртан 4 трактăр çеç йусанă. Çĕрпӳ машинă-трактăрлă станци тăваттăмĕш квартăлта трактăрсене тĕпренех йусамали плана ытлашшипех тултарнă. План тăрăх 9 трактăр йусамала пулнă пулсан, 12 трактăр йусанă. Çав вăхăтрах текущчи ремонт йулса пырать.

Патăрйел МТС-че 23 трактăртан 4 трактăр, Пăрачкавра 4 трактăр çеç йусанă. Ишлей, Улатăр, Шăхасан, Йĕпреç, Канаш, Тутаркас, Вăрнар машинă-трактăрлă станцийĕсенче те трактăрсене йусас ĕç пит вăрахăн пырать.

Машинă-трактăрлă мастерскойĕсем те трактăрсене йусас ĕçре çитĕнӳсем тунипе мухтанма пултараймаççĕ-ха. Канашри тата Çĕрпӳри мастерскойсем плана тултарса пыраймаççĕ. Вĕсенче рабочисене ĕçлеме условисем туса паман. Çĕрпӳри мастерскойра рабочисем валљи общежити çитмест, çавăнпа чылай рабочисем каçсерен йалсене кайаççĕ.

Трактăрсене йусас ĕç чăтма çук йалăх пынине Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн машинăсен пайĕ (начаљникĕ Щетинин) тата районсенчи организацисем ку ĕçе йертсе, ĕçре пулăшса пыманнипе çеç ăнлантарса пама пулать. Вырăнсенче трактăрсене йусас ĕç мĕнле пынине Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче тĕплĕн пĕлмеççĕ. Вĕсем вырăна тухса, трактăрсене йусас çĕрте пулăшу памаççĕ. Республикăри МТС-че трактăрсене йусанăшăн тĕрлĕрен тӳлеççĕ. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн машинăсен пайĕ МТС-сене ку вăхăтченех трактăрсене йусамали тата ĕçшĕн тӳлемели пĕр пек норма туса паман. Ку тĕлĕшпе машинă-трактăрлă станцисем хăйсем пĕлнĕ пек ĕçлеççĕ. Çакă та ĕнтĕ трактăрсене йусас çĕрте чылай чăрмантарать.

Трактăрсене йусанă çĕрте мастерскойсенче, çавнашкалах МТС-сенче бригадăсем туни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кун пирки Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Парти Обкомĕ трактăрсене йусама стахановец-трактăристсенчен тата комбайнерсенчен бригадăсем тăвассин çинчен çирĕппĕн кăтартса хăварнăччĕ. Апла пулсан та, чылай машинă-трактăрлă станцисенче бригадăсем тăвассиче хаклаççĕ. Акă, Вăрмар МТС-че (директăрĕ Григорйев) трактăрсене йусама бригадăсем туман. Пĕр бригадăри трактăристсем хăйсен трактăрĕсене йусаса пĕтереççĕ те, вара тепĕр бригадă йусама тытăнать. Çапла ĕçленипе вара ĕçре хуçасăрлăх, ответсăрлăх пулать. Çавна пулах ĕнтĕ Вăрмар МТС-че йусанă 10 трактăртан пĕринпе те ĕçлеме май килмест.

Трактăрсене вăхăтра тата пысăк пахалăхлă йусас тесен ĕçе тĕрĕс организацилес, шалти ресурссемпе анлăн усă курас пулать, çавнашкалах рабочисен кашни ыйтăвĕ çине тимлĕн пăхмала.

Ĕçе бољшевикла организациленĕ çĕрте ĕçсем те аван пыраççĕ. Кувакинă МТС-че ку вăхăтчен 15 трактăр йусанă.

МТС-семпе МТМ-сенче трактăрсене йусамали графиксене тунă. Анчах вĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Çав графиксене тĕрĕс пăхăнса ĕçлемеле, график пурнăçа кĕрсе пынипе трактăрсене йусанин пахалăхне тĕрĕслесех тăмала.

Чылай МТС тата МТМ директăрĕсем трактăрсене йусас ĕç вăрахăн пынине запаслă пайсем çуккипе ăнлантарса пама пăхаççĕ. Вĕсем çав пайсене такамсем тупса парасса кĕтеççĕ. Çапла вара, трактăрсене йусамали чи хаклă вăхăта усăсăр иртереççĕ. Запаслă пайсене вăхăтра шыраса тупассишĕн нихăшĕ те тăрăшмаççĕ. Запаслă пайсене май килнĕ таран перекетлемеле, вĕсене мĕнле расхут тунине çирĕп шута илсе пымала.

Трактăрсене йусанă çĕрте ăмăртса, стахановла ĕçлени пысăк вăй пулса тăрать. Анчах çакна МТС тата МТМ работникĕсем çаплах ăнланса илесшĕн мар. Канашри тата Çĕрпӳри машинă-трактăрлă мастерскойĕнче, çавнашкалах Шăхасан, Вăрмар, Елĕк МТС-сенче трактăрсене йусанă çĕрте стахановла йухăма анлăн сарса пыни çук. Шăхасан МТС-че рабочисенчен нихăшĕ те ăмăртса ĕçлемеççĕ, рабочисем хушшинче дисциплинă начар.

Трактăрсене тата ытти машинăсене йусас ĕçе чăрмантарса пыракансемпе хайаррăн кĕрешсе, çĕрĕç органĕсенче тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерсе пымала. Трактăристсене, механиксене тата ытти рабочисене мобилизацилениипе трактăрсене йусамали плана партипе правительствă кăтартса панă срукра тултармала.

Совет государствин социалисăмлă йалхуçалăхĕнче машинăсене йусама вăйлă база туса панă. Трактăрсене правительствă кăтартса панă срукра йусаса пĕтерме пур условисем те çителĕклĕ. МТС, МТМ рабочийĕсем, трактăристсемпе комбайнерсем тата механиксем трактăрсене йусамали плана вăхăтра тултарассишĕн тăрăшаççĕ. Çакнашкал условисенче йуçса пыни килĕшӳсĕр. Трактăрсене йусакан предприйатисен, партипе совет тата çĕрĕç организаци руководителĕсен трактăрсене йусакан рабочисем хушшинче массăлă ăнлантарулă ĕçе лайăх туса пынипе социалисăмла ăмăртăва, стахановла йухăма анлăн сарса пымала.

Трактăрсене йусанă çĕрте ĕçлекен рабочисем, мастăрсем тата механиксем, трактăрсен паркне вăхăтра, пысăк пахалăхпа йусаса çитерессишĕн социалисăмла ăмăртăва хутшăнăр!

ТАСС пĕлтерни

Пулă тытас ĕçсем пирки калаçнисем тавра

ТАСС авторитетлă вырăнсенчен пĕлнĕ тăрăх, çак уйăхăн 8-мĕшĕнче Йапони посолĕ г. Того Йут çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне Литвинăв йулташа, Литвинăв йулташăн кăçалхи нойабĕрĕн 28-мĕшĕнчи зайавленийĕ пирки Йапони правительстви панă ответа пĕлтернĕ.

1. Йапони правительстви, „никама пăхăнасмарлăх çинчен пĕлтернĕ" пек пысăк событи пулса иртнĕ хыççăн, Манчжури Портсмутра догăвăр тунă чухнехи вăхăтринчен пачах урăхла пулса тăнă тесе шутлать. Йапони унта, Манчжурипе догăвăр тунă тăрăх, çар тытас правапа усă курать.

Литвинăв йулташ, г. посол „Манчжоу-Го никама пăхăнасмарлăх çинчен пĕлтерни" тесе калакан событи Йапони Манчжурине çар кĕртсе йанă тата унта чылай нумай çар хăварнă пирки пулса тăнă тесе, çакăн пек шутланнине хирĕç пулнă. Йапони правительстви Манчжурири хаљхи влаçăн природи çинчен калакан зайавленипе Совет Сойузĕ кăна мар, тата хаљхи вăхăтра 60 государствăна йахăн пĕрлештерсе тăракан Лигă Наци те, çавăн пекех Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем те килĕшмеççĕ. Манчжурире çĕнĕ йĕрке пулса тăнă, çак йĕрке тăрăх Портсмут догăвăрĕн статйисем чылайĕшĕ обйазательнă мар пулса тăнă тесе йышăнас пулсан, Совет правительстви çапах та, Йапони шĕн усăлă мар статйасем пăрахăçа тухаççĕ, уншăн усăлă статйасем пурте çаплипех йулаççĕ тесе шутламали права пĕр Йапони йенче кăна тăрать тесе йышăнма пултараймасть. Çак ыйту тăрăх Йапонипе Совет Сойузĕн шухăшĕсем пĕр-пĕринчен уйрăм пулнине палăртса, Литвинăв йулташ ку темă пирки тавлашассине, вăл пулă тытас ыйтупа çыхăнса тăмачран, пăрахма сĕннĕ, çакăнпа г. посол килĕшнĕ.

2. Г. Того каланă: Лаперузă проливĕнчи пырса кĕме чарнă зонăсем совет пăрахучĕсене ирĕккĕн çӳреме чармала мар, тенĕ. Кун пирки Литвинăв йулташ хирĕç таврăрса çапла каланă: пролив çыранĕсем хĕррипче çар сооруженийĕсем тума права çук чухне, унта пырса кĕмелле мар зонăсем те пулма пултараймаççĕ, тенĕ. Анчах,—тенĕ вăл,—мĕнле пулсан та, Йапони правительстви проливра малашне совет пăрахучĕсене ирĕккĕн çӳреме чăрмавсем пулмаççĕ тесе шантарса каланине хисепе илет.

3. Йапони посолĕ тата тепĕр хут: Китай-Хĕвелтухăç чукунçулĕшĕн укçа тӳлессипе пулă тытас калаçусем хушшинче нимĕнле çыхăну та çук тенĕ. Пур тавлашулă ыйтусене те уйрăммăн, йĕрипен, йĕркипе татса пымала. Анчах та, тенĕ вăл, пулă тытмали конвенцине Йапони правительстви çирĕплетнĕ редакци пек сакăр çуллăха, — анчах ăна Совет правительстви ку таранччен ырламасăр тăрать,—халех, декабĕрĕн 10-мĕшчен алă пуссан, Йапони правительстви чукунçулшăн укçа тӳлесси çинчен тăракан ыйтăва лайăх йенчен пăхса тухма хатĕр, тенĕ. Конвенцине çакăн пек васкавлăн алă пусни, посол шучĕпе, Йапони законодательствин хăшпĕр формаљнăй йенĕсенчен тухса тăнă пирки кирлĕ пулать вара. Йапони пулă тытас пирки урăхла нимĕнле килĕшӳ тума та, нумай вăхăта та, вăхăтлăха та, килĕшмест.

Литвинăв йул. каланă: Китай-Хĕвелтухăç чукунçулĕшĕн укçа тӳлемели гаранти пулă тытмали конвенципе çыхăнса тăма йе вăл конвенцине апла йе урăхла редакцилениинчен килме пултараймасть, вăл гарантине нимĕнле услови лартмасăрах, пур обстойательствăсем чухне те пурнăçламала. Çак йенчен илсен чăнахах та çак икĕ ыйту хушшинче çыхăну çук. Анчах çыхăну пĕр çакăнта кăна пур: Йапони правительствин, хăйĕн обйазательствине тултарман хушăранах Совет Сойузĕ çинче тăракан обйазательствăсем çине çав тери çине тăрса кăтартма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен, Совет Сойузĕ хăйĕн обйазательствисене пăсни пулман. Тавлашулă ыйтусене йĕркипе татса пырас пулсан, Китай-Хĕвелтухăç чукунçулĕшĕн укçа тӳлессинчен тытăнас пулать, укçа тӳлемели срук ахаљ те 9 уйăх иртнĕ. Пулă тытас пирки вăхăтлăха тунă килĕшӳ срукĕ—декабĕрĕн 31-мĕшне çитиччченех пырать. Йапонецсен сезон пĕтиччченех пулă тытма май пулнă. Совет правительстви ку тĕлĕшпе вĕсен правине пĕтермеле тума шутламасть. Пулă тытмали сезон тепĕр темиçе уйăхран тин пуçланать. Çапла ĕнтĕ, хронологи йенчен илсен, Китай-Хĕвелтухăç чукунçулĕшĕн укçа тӳлесси çинчен тăракан ыйту малтан татса памали пулать. Господин посол „лайăх йенчен пăхса тухасси" çинчен калани тăтăклă калани пулмасть. Кунта укçана чăннипе банка хывни йе укçа тӳлемели срука тĕрĕс кăтартса пани пулмала. Укçана банка хывасси йе укçа тӳлемели срука кăтартса парасси декабĕрĕн 10-мĕшчен пулсан, Совет правительстви пулă тытас пирки нумай вăхăтлăха конвенци тума мĕнле условисем тăрăх килĕшнин çинчен Йапонине халех паллаштарма хатĕр, вара ĕçе декабĕрĕн 10-мĕше тĕлне туса пĕтересси Йапони правительствинчен килет. Литвинăв йулташ тата тепĕр хут вăл хăй нойабĕрĕн 28-мĕшĕнче пĕлтернĕ зайавленийĕ çинчен аса илтернĕ. Уйчухне Совет правительстви пулă тытмали конвенци тăвас пирки мĕнле условисем тăрăх килĕшме шутлани çинчен тата пулă тытма вăхăтлăха килĕшӳ тумали никĕс çинчен уççăн кăтартса панă.

Йапони посолĕ çак калаçу çинчен хăйĕн правительствине пĕлтерме пулнă.

ССРС Верховнăй Советне суйлани çулталăк тултарнă йатпа тунă производствăлă çĕнтерӳсем

** Совет çĕршывĕнчи предприйатисем ССРС Верховнăй Советне суйлани пĕр çулталăк тултарнине производствăра пысăк çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илчĕç. РСФСР апат-çимĕç промышленнăçĕ пĕтĕм халăх суйлавĕсем çулталăк тултарнине пысăк çĕнтерӳ тунипе кĕтсе илнĕ. Вăл çулталăкри заданине декабĕрĕн 8-мĕш тĕлне пĕтĕмпех пурнăçа кĕртнĕ. РСФСР апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн промышленнăçне кăçал планран ытлашши 150 мĕлйун тенкĕлĕх ытла продукци туса кăларма хушнă.

** Горькинчи Молăтăв йачĕпе тăракан автосавăт „М-1" çăмăл машинă туса кăларас çулталăкри плана срукран 19 кун маларах тултарнă. Кăçал вăл пирĕн çĕршыва 22 пин лимузинсем панă, çулталăк пĕтиччен тата 1 500 машинă йахăн туса кăларать.

** Ленинградри ОГПУ йачĕпе тăракан савăт коллективĕ продукци туса кăларас плана 102 процент тултарнă. ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ Сметанин йулташ йертсе пыракан Ленинградри „Скороход" хапрăкĕ çулталăкри планран иртерсе темиçе пин мăшăр ата-пушмак туса кăларнă.

** Тамбоври вакунсем йусакан совăт çулталăкри программăна срукчен тултарма пулса хăй çине илнĕ обйазательствăна пурнăçа кĕртнĕ. Декабĕрĕн 12-мĕш тĕлне вăл планран иртерсе таварсем турттаракан 8 вакун тата пассажирсен вакунне 25 штук йусаса кăларнă.

** Çавăн пекех, Пермри промышленнăç комбиначĕ те хăйĕн çулталăк планне декабĕрĕн 11-мĕш тĕлне тултарнă. Вăл кăçал халăха куллен кирлĕ таварсене 4 мĕлйун тенкĕлĕх туса кăларнă. Иртнĕ çултипе танлаштарсан, кăçал туса кăларнă таварсен хисепĕ пĕр мĕлйун та 70 пин тенкĕлĕх ӳснĕ.

** Грознăйри ремонтпа механический савăтăн коллективĕ çулталăк планне срукчен тултарса, планран ытлашши 0,5 мĕлйун тенкĕлĕх ытла промысласене валљи оборудованисем туса кăларнă.

(ТАСС).

Испани педагогĕсем совет шкулĕсен опытне вĕренеççĕ

Испани ачисемпе пĕрле Совет Сойузне Испани педагогĕсем те килнĕ. Испани ачисем Мускаври тата Мускав çывăхĕнчи вырăнсенче йатарласа тунă ача çурчĕсенче пурăнаççĕ, унтах вĕсем вĕренеççĕ. Республикăлă Испанин çамрăк граждăнĕсене вĕрентнĕ вăхăтрах, Испани педагогĕсем совет шкулĕсен ĕçĕнчи опытсене вĕренеççĕ.

Çак кунсенче анчах Испани педагогĕсем, пурĕ 9 çын, Мускаври Свердлăв районĕнчи 175-мĕш номĕрлĕ шкулта пулнă. Вĕсем кунта уроксенче пулнă, шкулти тата шкул тулашĕнчи ĕç методикипе паллашнă, педагогсемпе, вĕренекенсемпе, шкул директăрĕпе—ССРС Верховнăй Совет депутачĕпе О. Ф. Леонăвă йулташпа калаçнă.

ССРС Верховнăй Советне суйлани çулталăк тултарнă йатпа шкулта вĕренекенсемпе педагогсен пухăвĕ пулса иртнĕ. Унта О. Ф. Леонăвă йулташ хăй депутат пулса мĕнле ĕçлени çинчен каласа панă.

Пухура Испани педагогĕсен йачĕпе Хонче Фернандес тухса каланă.

— Епĕ аслă совет халăхĕн ачисемпе калаçнă чухне мĕн пек хĕрӳлĕ кăмăл тулса çĕкленнине есĕр шутласа илме те пултараймастăр,—тенĕ Хонче Фернандес.—Испанире вăрçă чарăнсан, епĕ пирĕн патăрта та ачасене пурăнма сирĕн патăрти пекех телейлĕ тума, пирĕн çитĕнсе çитнĕ труженниксене те сирĕн аçуаннӳсем, сирĕн аслă пичусемпе аппусем пекех телейлĕ тума тăрăшăп.

Çамрăк туссем, есĕр хăвăра Сталин йулташ кăтартса пыракан çулпа—çĕнтерӳсен çулĕпе пырăр, тесе пĕтернĕ вăл хăйĕн сăмахне. Хонче Фернандес каланисене пуху тăвăллăн алă çупса йышăннă.

(ТАСС).

Пољар каçĕнче

Совет Арктикин кулленхи ĕçĕсем

Хаљхи вăхăтра вĕçĕ-хĕррисĕр анлă Арктикă талкăшĕнче пољар каçĕ тăрать. Анчах та паттăр совет пољарникĕсем инçетри Çурçĕре çĕнсе илес тĕлĕшпе хăйсен ĕçĕсене пĕр кунлăха та чарса лартмаççĕ.

Çурçĕр тинĕс çулĕн тĕп управленийĕн пољарти станцисен тытăмĕ йулашки кунсенче Çурçĕртен пољарти кулленхи ĕçсем çинчен темиçе радиограммă илнĕ. Чељускин мысĕнчен—1938 çулта тумали научнăй ĕçсен планне анăçлăн тултарни çинчен пĕлтереççĕ. Хĕвелтухăç-Çĕпĕр тинĕсĕ çинче пăрсем хушшинче куçса çӳрекен „Ост" йатлă гидрографи судни çинче те пĕрмайăх научнăй ĕçсем туса пыраççĕ. Пољар каçĕ тăнине, çанталăк 40 градус таран сивĕ тăнине пăхмасăрах, научнăй работниксем кашни кун тинĕс тарăнăшне виçсе пыраççĕ. „Ост" çинчи пĕтĕм командă радио тăрăх ПСК(б)П истори курсне йĕркелĕн итлесе пырать.

Диксон утравĕ çинче хĕл каçакансем, пурĕ 20 çын, çак кунсенче туса лартнă çĕнĕ, ăшă, лайăх хваттерсене куçнă.

Тихайа бухтинче радиссем çĕнĕ трансљаци радиоузелĕ туса лартнă. Желанийа мысĕнче хĕл каçакансем çак кунсенче библиотекă туйаннă. Тикси бухтинче пољарнăй станци работникĕсем çилпе ĕçлекен двигатĕл туса лартнă, вăл пĕтĕм поçолăка електроенерги парса тăрать.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

* * Тăванлă республикăсенчи писателсем Мускава пынă. Декабĕрĕн 10-мĕшĕнче вунă сойузлă республикăсенчи писателсемпе поетсем Мускава çитнĕ. Вĕсене пурне те Совет писателĕсен Сойузĕн правленийĕ курса-конференцине чĕннĕ. Вăл конференцин тĕп задачи — тăванлă республикăсенчи литературăн çамрăк представителĕсене теорилĕ тата художествăлă пĕлӳлĕхне ӳстерме пулăшасси пулса тăрать.

* * В. В. Майаковский сочиненийĕсене академилĕ изданипе кăлараççĕ. В. В. Майаковский сочиненийĕсен редакцийĕ килес çул пуçламĕшĕнче поетăн пĕтĕм произведенийĕсене пухса академилĕ изданипе кăларма тытăнать. Вăл изданине Майаковскин художествăлă произведенийĕсене пурне те, унăн статйисемпе çырăвĕсене кĕртеççĕ. Çавăн пекех поетăн сочиненийĕсен пуххинче ăнлантарса паракан статйасем те пулаççĕ.

* * Трактăрсене йусас ĕç. Трактăрсене çураки валљи йусаса хатĕрлес ĕç халĕ те çителĕксĕр пулса пырать-ха. Декабĕрĕн 5-мĕш тĕлне кăçалхи IV-мĕш квартăлта МТС-чи трактăрсене тĕпренех йусас плана мĕнпурĕ те 22 процент çеç тултарнă, текущчи ремонт планне 16 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ. РСФСР МТС-сем ку ĕçре пуринчен те кайа йулса пыраççĕ, трактăрсене тĕпренех йусас плана 19 процент, текущчи ремонт планне—11 процент çеç тултарнă.

** Декабĕр уйăхĕнче ССР Сойузне паллă шахматис-гроссмейстĕр Самуил Решевский килет. Вăл Мускавра, Ленинградра пулать тата совет шахматисĕсемпе тĕл пулать.

** Машиностройенин тĕп управленинчи (Главлегмаш) савăтсем кăçал çăмăл промышленнăç валљи 60 тĕслĕ çĕнĕ машинăсем туса кăларнă. 1939 çулта „Главлегмаш" савăчĕн пир-авăр промышленнăçĕ валљи тата çĕнĕрен 100 тĕслĕ машинăсем туса кăлармала.

** Декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Атăл тăрăхĕнчи Горький йачĕпе тăракан вăрманĕç техникин институчĕ (Йошкар-Ола) хăй 20 çул тултарнă йубилейне уйавланă. Института уçнăранпа унта 1.600 специалис ытла вĕрентсе хатĕрленĕ. Хаљ вăл институтра 400 студент вĕренет. Вĕсем хушшинче тăхăр наци: чăвашсем, марийĕцсем, тутарсем, удмуртсем, мордвасем т. ыт. Хаљ тата 73 пулас инженер теори йенĕпе вĕренсе пĕтерсе дипломлă пройектсене хӳтлеме хатĕрленеççĕ.

Германин Францири шпионажĕ

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, Германин Францири шпионĕсен ĕçĕсем вăйлăланса пыраççĕ.

„Љумйер" журнал: Францире Германи фашисăмĕн тĕрлĕ тĕслĕ ултă ведомстви ĕçлет, вĕсем пиншер шпиона пĕрлештерсе тăраççĕ, тесе кăтартса парать. Германин Парижри посољстви политикăлă разведкă туса, Франци пичетне хăй майлă çавăрас шутпа пит нумай укçа-тенкĕ расхутлать. Лионра, Марселре тата Францин ытти хулисенче те „опорлă группăсем" тунă, вĕсем Германин Парижри посољствине пăхăнса тăраççĕ.

(ТАСС).

Испани компартин Тĕпкомĕ Долорес Ибаррури йулташ патне йанă çыру

БАРСЕЛОНА, декабĕрĕн 12-мĕш. (ТАСС). Испани компартин Тĕпком политбӳровĕ Пассионарийа çурални 43 çул тултарнă йатпа, ун патне саламлă çыру йанă. Çырура çапла каланă: „Пирĕн халăхшăн йăвăр килсе тухнă минутсенче есĕ хамăр çĕр çинчен пур захватчиксене те хăваласа кăларма тăрăшакан Испани халăхĕ хурăç пек çирĕп ирĕк-кăмăлĕн символĕ пулса тăратăн. Есĕ Испани халăхĕн пĕрлĕхĕшĕн пĕр пăркаланмасăр кĕрешни тĕнчери пур антифашиссене те савăнтарать".

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Долорес Ибаррури (Пассионарийа) йулташ.

Германире фашисăма хирĕç кĕрешекенсене катăргăна йамала тунă

Декабĕрĕн 10-мĕшĕнче фашиссен сучĕ Берлинра фашисăма хирĕç кĕрешекенсене 25 çынна 5—15-шер çуллăха катăргăна ĕçлеме йамала тунă. Çак группăн руководителне Филиппсон профессăра ĕмĕрлĕхех катăргăна йамала тунă.

Çав кунех тата фашисăма хирĕç кĕрешекен 3 çын ĕçĕ тăрăх пригăвăр йышăннă. Вĕсенчен пĕрне—43 çула çитнĕ Генрих Бревес учителе 15 çул хушши катăргăра ĕçлеттермеле тунă. Германири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Бревеса, вăл республикăлă Испанине пулăшма укçа-тенкĕ пухас ĕçсен организатăрĕ пулнă, тесе айăпланă.

(ТАСС).

Франципе Итали хушшинчи хирĕçӳсем çивĕчленсе пыраççĕ

Франципе Итали хушшинчи хирĕçӳсем ытларан ытларах çивĕчленсе пыраççĕ.

Тунис патне пымали вырăнта Итали çарĕсен пысăк вăйĕсене пуçтараççĕ. Итали пичечĕ Франциве уçăнах йунать, Итали фашисăмĕ намăссăрăн ыйтакан Туниса тата ытти территорисене памасан, вара „стенана вăйпа çĕмĕрсе кĕмеле пулать" тесе çырать.

Франци хăй черечĕпе Тунисра, Итали колонийĕ—Ливи—чиккисем хĕррипе укрепленисем тăвас ĕçе вăйлатать. Çак чикĕ патне Францин колонири çарĕсене пĕр корпуса йахăн илсе пынă.

Итали фашисĕсем Вăтаçĕр тинĕс çинче пĕр хăйсем кăна пуç пулса тăрассишĕн тăрăшни Англире те тревогă пуçласа йанă, мĕншĕн тесен Италин йут çĕрсене туртса илмели планĕсем Англи интересĕсемшĕн те хăрушлăх туса хураççĕ. Пурте пĕлеççĕ, Англин Хĕвелтухăçпе суту-илӳ тумали çулĕсем пурте Вăтаçĕр тинĕс урлă выртаççĕ. Кунсăр пуçне, Англин çар карапĕсем Вăтаçĕр тинĕс тăрăх ирĕклĕн çӳресси Англишĕн пит пысăк, ĕçе татса паракан вырăн йышăнса тăрать.

Итали Вăтаçĕр тинĕс çинче пуç пулса тăни Англин тинĕс çинчи хăватне питĕ те вăйлăн сиенленĕ пулнă пулĕччĕ.

(ТАСС).

Фашиссем Малагăри тĕрмене хупса хунă çынсене вĕлерни

Декабĕрĕн 9-мĕшĕнче Малагăри (Испанири пăлхавçăсем туртса илнĕ хула) тĕрмере фашиссем хупса хунă вунă çынсене çакса вĕлернĕ. Вырăнти палач çавăн чухлĕ нумай çынсене пĕччен вĕлерсе пĕтерме пултарайманнине кура, ăна пулăшма фашиссем Севилйари палачсене илсе пынă. Çакса вĕлернисен йачĕсене, мĕншĕн вĕлернин сăлтавĕсене пăлхавçăсен влаçĕсем пытарса усраççĕ.

Республикăлă Испани пичечĕ çапла кăтартса парать: тĕрмене хупса хунă çынсене çапла вĕлерни вăл тӳррĕмех Италине хирĕçле выступленисем тунипе çыхăнса тăрать. Италине хирĕçле выступленисем йулашки вăхăтра питĕ те анлăн сарăлса кайнă.

Декабĕрĕн 10-мĕшĕнче Малагăна Итали çарĕсен пысăк чаçĕ пырса çитнĕ.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

МТС-ри коммуниссен пухăвĕ

Иртнĕ çулсенче Тракри МТС çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци виçĕ çынтан кăна тăнă. Çак виçĕ çын пуханса парти пухăвĕсене иртернĕ. Пухусене пĕрмайах хупă иртернĕ. Партире тăман активпа ĕçлемен. Паллах, кун пек массăран уйăрăлса ĕçленипе парторганизацин ĕçĕ малала кайма пултарайман. Вара парторганизаци хăйĕн умне партире тăман активпа ĕçлесе парти ретне ӳстерес задача лартрĕ. Ку задачăна епĕр пурнăçлатпăр та. Партин уçă пухăвĕсене сочувствуйушчисене, комсомолĕцсене, партире тăман актива хутшăнтарнă хыççăн партине кĕме ыйтса зайавленисем пама пуçларĕç. Халĕ пирĕн парторганизаци 12 çынран тăрать. Коммуниссен активлăхĕ чылай хăпарчĕ.

Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче коммуниссен уçă пухăвĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" йышăннă постановленине сӳтсе йаврĕ. Пухура 31 çын пулчĕç.

Пренире тухса каланă йулташсем ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленине ырласа, партилĕ пропагандă ĕçне урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе паха сĕнӳсем пачĕç. Коммуниссем чылайĕшĕ парти историне хăйсем тĕллĕн вĕренесшĕн. Хăшпĕрисен килте вĕренме условисем çук. Акă, коммунис тата комсомолĕц тракторисссем трактăрсене йусанă вăхăтра МТС-ра пурăнаççĕ. Анчах хаçат журналсене ларса вулама йе тĕрлĕ кружоксен занятисене иртерме МТС-ра уйрăм пӳлĕм çук. Пуху парти историне вĕренекенсем валли уйрăм пӳлĕм уйăрма йышăнчĕ. Ку пӳлĕмре марксисăмленинисăм классикĕсен произведенийĕсем, хаçат-журналсем пулмала. Унтах лекцисем, консультацисем пулмала.

Г. Закамский.

Пуçламĕш организацин ĕçĕ аваланчĕ

Чăвашдревпромсойузри комсомол организацин отчотпа суйлав пухăвĕнче комсомолĕцсем идейăлăполитикăлă воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе чылай сĕнӳсем панă. Çĕнĕ комитет комсомолĕцсен сĕнĕвĕсене пурнăçласа пырать. Иулашки вăхăтра çамрăксене пилĕк çынна комсомол ретне илчĕ. Хальтата тепĕр йулташ комсомола кĕме хатĕрленет. Вăл ПСÇЛКС программипе уставне вĕренет.

Комитет хушнă ĕçсене тăвас тĕлĕшпе комсомолĕцсен ответлăхĕ те ӳсрĕ. Иртнĕ кунсенче Павлăв йулташа çак организацире ĕçлекенсем хушшинче хаçат-журнал сарма хушнăччĕ. Вăл кĕске вăхăтрах 670 тенкĕлĕх хаçат-журнал сарчĕ.

Организацири ытларах хатĕрленнĕ комсомолĕцсем çичĕ çын „ПСК(б)П историн Кĕске курсне" харпăрхăй тĕллĕн вĕренме пуçларĕ. Сахалтарах хатĕрленнĕ комсомолĕцсем валли кружок организацилеççĕ. Чылай комсомолĕцсем тăтăшах Шупашкарти парти вĕрентĕвĕн çуртĕнче пулса иртекен лекцисене итлеме çӳреççĕ.

Халиччен пирĕн библиотекă йĕркелĕ ĕçлемесчĕ. Халь ĕнтĕ администраци библиотекă валли уйрăм пӳлĕм пачĕ тата литературă илме укçа уйăрчĕ.

Комсомол комитечĕ пуçарнипе, служащисене тĕнчери лару-тăру çинчен доклад туса панă тата Хасан кӳлли патĕнче пулса иртнĕ ĕçсем çинчен пысăк калаçу иртернĕ. Унти ĕçсем çинчен Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусен участникĕ вăрăм сруклăх отпуска килнĕ Серов йулташ каласа панă.

Комсомол комитетне пуçламĕш парторганизаци пысăк пулăшу парать. Комсомолĕцсен пухăвĕсенче коммуниссем йалан пулаççĕ.

И. Большаков.

План тăвас ĕçе пур коммуниссем те хутшăнчĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. „Портной" ертел çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче халиччен план тăвас ĕç çине йалан çийелтен пăхнă. Плана сӳтсе-йавас ĕçе коммуниссене хутшăнтарман. Парторг малтан çырса хатĕрленĕ плана вуласа панă та, вара ĕçĕ те пĕтнĕ.

Халь, нумай пулмасть, çитес виçĕ уйăх валли план турăмăр. Плана сӳтсе-йавас ĕçе коммуниссем активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем паха сĕнӳсем пачĕç. Уйрăмăнах ертел членĕсем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе сарса йама, Осоавиахимăн пуçламĕш организацин ĕçне, тĕне хирĕçле пропагандăна лайăхлатма сĕнчĕç. Чăнах та çак ĕçсем халиччен пит йапăх пулса пынă.

План тăвас ĕçе кашни коммуниса хутшăнтарни, кашни коммунисăн шухăшне шута илни — ĕçе чылай анлăрах туса пыма май парать.

Парторганизаци плана палăртнă ĕçсене вăхăтра туса пырать. Иртнĕ кунсенче ертел членĕсем хушшинче тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем çинчен доклад туса патăмăр. Доклад итлеме 200 çынна йахăн пухăнчĕç. Икĕ хутчен тĕне хирĕçле доклад пулчĕ. Ертел членĕсем çак докладсемпе пит интересленеççĕ.

Плана палăртнă ĕçсене пурнăçласа пырас тĕлĕшпе кашни коммуниса уйрăм поручени панă, вĕсем хăйсене панă порученисене тимлĕн, тăрăшса пурнăçласа пыраççĕ.

Парторг Н. Кайахăв.

Шупашкар хулинчи çĕнĕрен тунă вăтам шкул, унта 880 ача вĕренмеле.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Вĕренӳ ĕçне пăхса тухнă хыççăн

Нумай пулмасть Трак районĕнчи учитĕлсен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухура итленĕ докладран тата тухса калакансен сăмахĕсенчен акă мĕн палăрчĕ: кăçал Трак районĕнчи шкулсенче пурĕ 6000 ачана йахăн вĕренеççĕ. Хăшпĕр çĕрте, шкула çӳреме тивĕçлĕ ачасенех вĕренĕве йавăçтарман пирки, районĕпе 280 ача шкул тулашĕнче тăрса йулнă, вăл шутран 128 ача пуçламĕш шкулсенче вĕренмеллисем.

Ачасене шкула йавăçтарас йĕнĕпе уйрăмăнах Карайри туллимар вăтам шкулпа Арçунакассинчи пуçламĕш шкул начар ĕçленĕ. Карай шкулĕнче пĕр класа октабĕрĕн 15-мĕш тĕлне çеç комплектласа çитернĕ. Ку ĕнтĕ, паллах, ачасене шкула йавăçтарассине шкул пуçлăхĕсемпе райçутĕç пайĕ (заведуйушчийĕ Гурйĕв йулташ)çителĕклĕ хакламанниччен килнĕ.

Именкасси, Кушар тата Супар шкулĕсем пайанччеnех вутăсăр лараççĕ. Именкасси шкулне иртнĕ çулхине те вутă çук пирки уламп хутса ăшăткаласа пурăннă.

Карай йалсоветне кĕрекен шкулсенче тасалăхшăн кĕрешмеççĕ. Ачасем хушшинче чир-чĕр сарăлни палăрать.

Вĕренӳ пахалăхне ӳстерес йĕнĕпе Карай, Супар тата Çавалçырма шкулĕсем йулса пыраççĕ.

Çутĕç пайĕ çамрăк учитĕлсене пулăшас тĕлĕшпе халиччен нимĕн те туман. Çутĕç пайĕнче инструктăрсем çитмеççĕ. Методикă кабинетне ку тарана çитсе те йĕркелемен. Трак районĕнчи учитĕлсем Çĕрпӳ районĕнчи учитĕлсене социалисăмлă ăмăртăва чĕннĕ. Ăмăрту догăвăрĕ мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслесси çинчен никам та аса илмест.

Пуху çакнашкал çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерсе, вĕренӳ ĕçĕнче татăклă улшăну тума кирли çинчен çирĕппĕн каласа хăварчĕ. Районри çутĕç пайне пĕтĕм вĕренӳ ĕçне кулленех çирĕппĕн те тимлĕн йертсе пыма кирли çинчен асăрхаттарчĕ.

А. Кисельов.

Политпросвет шкулне пулăшмала

Кăçал Шупашкарта республикăри политпросвет шкулĕ уçăлчĕ. Вăл шкулта массă хушшинче активлă ĕçленĕ работниксем виçĕ çул хушши вĕренсе, Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин вĕрентĕвĕпе хĕçпăшаланма тивĕçлĕ.

Анчах Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ политпросвет шкулĕ мĕн пек паха кадрсем хатĕрлеме пултарнине ăнланса илесшĕн мар. Политпросвет шкулĕ валли кирлĕ условисем туса парассишĕн никам та тăрăшмасть.

Чи малтанах кунта шкулăн хăйĕн уйрăм пӳлĕм çукки хуплать. Педучилищă класĕсенче каçхи сменăра вĕренме тивет. Каçхине час-часах çутă çуккипе уроксем пулмаççĕ йе çутă пур пулин те пĕр лампă кăна çутнипе (тата хăшпĕр чухне çурта çутипе те) вĕренекенсен куç вайĕ чакни палăрма пуçларĕ.

Вĕренекенсем валли общежити çук пирки, пурте тенĕпе пĕрех, хула çывăхĕнчи йалсенче хватерте пурăнаççĕ. Кунта, паллах, вĕренме условисем çителĕклĕ мар. Шкулăн завхозĕ вĕренекенсен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшмасть.

Шкулта вĕренме условисем çук пирки вĕренекенсем пăрахса кайма пуçларĕç. Ултă çын пăрахса кайрĕç те ĕнтĕ.

Кунсăр пуçне тата вĕренекенсем хушшинче нимĕнле организацилĕ ĕç те çук. Шкулта 45 комсомолĕц. Комсомолĕцсем хушшинче ку тарана çитсе те политвĕренĕве йĕркелемен. Комсомол хула комитечĕ политпросвет шкулĕнчи комсомол организаци çинчен аса та илмест.

А. Горбунов.

ХАСАН ГЕРОЙĔСЕМ

Батальйон комиссарĕ Абрашĕв

Боевой приказа пурнăçа кĕртнĕ хыççăн автомашинăсене пăхса тĕрĕслерĕмĕр. Мускаври Сталин йачĕпе тăракан савăтра кăларнă „ЗиС" автомашинăсем, Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнчи пиншер çухрăма темиçе хут та урлă-пирлĕ, кайлă-майла тухнă. Вĕсем çулсăр, сăртлă, кӳлĕлĕ, шурлăхлă тата ытти вырăнсенче те пĕр чăрăнмасăр çӳренĕ. Халĕ Йапони самурайĕсене çапса çĕмĕрнĕ хыççăн лăпкă кунсемпе пурăнатпăр. Малтанхи кунсене аса илетпĕр. Çапăçу пулас умĕн пĕр лăпкă кун пирĕн номĕрлĕ заставăна çĕнĕ комиссар килчĕ. Вăл красноармейĕцсемпе, командирсемпе, политработниксемпе паллашма тытăнчĕ. Сăнран пăхсан çамрăк, ăшă кăмăллă çын. Çак çĕнĕ комиссар—Григорий Романăвич Абрашĕв йулташ, 1912 çулта, йанвар уйăхĕнче, Чăваш республикĕнчи Куславкка районĕнче Мушар йалĕнче çуралнă. Совет влаçĕ пулăшнипе вăл шкулта тăрăшса вĕренет, 8-мĕш класран аван паллăсемпе вĕренсе тухать.

1934 çулччен комсомол Чăваш Обкомĕнче ĕçлет. Хăйне хушнă ĕçсене тӳррĕн те тĕрĕссĕн, вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырать.

1934 çулта Хĕрлĕ Çара кайать. Кунта вăл çак çултах кĕçĕн командира вĕренсе тухать. Кĕçĕн командир пулса лайăх ĕçленĕшĕн ăна 12 хут тав тăваççĕ. Пĕр çул иртсен Ленинградри Политикăлă çар училищине вĕренме кĕрет. Училищăра та примерлă пулнăшăн 9 хутчен тав тăваççĕ. Кунсăр пуçне ăна хăй йатне çырнă сехет парса премилеççĕ. 1938 çулта училищăран отличнă паллăсемпе вĕренсе тухать. Çакăншăн ăна ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ Ворошилăв йулташ 300 тенкĕ укçапа премилет. Абрашĕв йулташ хăйсене училищăран вĕрентсе кăларнă чухне Ворошилăв каланă сăмахсене йалан асра тытса, боевой приказсене вăхăтра, тĕплĕн, тĕрĕссĕн пурнăçласа пырать.

Ăна 1938 çулти ийуль уйăхĕнче Приморский уйрăм пĕрремĕш Хĕрлĕ Иалавлă çарне ĕçлеме куçарнă. Ăна Хĕрлĕ йалавлă дивизире артиллери полкĕн комиссарĕ тунă. Йапони самурайĕсем Хасан кӳлли районĕнче пирĕн социалисăмлă çĕршыв çине, социалисăмлă сат пахчине хăйсен сысна сăмсине чиксе пăхма ăмсансан, вăл вĕсемпе хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр паттăрăн кĕрешет. Мухтавлă паттăр Хĕрлĕ Çар тăшмана çирĕп отпор парать, çĕмĕрсе такать.

Пирĕн социалисăмлă çĕршыв, партипе правитĕлствă хăйĕн паттăрĕсене, геройĕсене хаклать. Халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ пирĕн чи хакли—çынсем, кадрсем, тенĕ. Абрашĕв йулташа та Хасан кӳлли районĕнче Йапони самурайĕсемпе паттăрăн кĕрешнĕшĕн совет правитĕлстви Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăларĕ.

Батальйон комиссарĕ Григорий Романăвич Абрашĕв йулташ хăйне пысăк хак хурса Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланăшĕн партипе правитĕлствăна, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа сывлăх сунса тав тăвать. Малашне те тăван çĕршыва çивĕччĕн те сисĕмлĕн сыхлама пулать.

Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусен участникĕ, „За отвагу" медальпе наградăланнă кĕçĕн командир А. Çтепанăв.

МАНМИ КУН

Тăп-тăрă каç. Сат çинчи уйăх
Сыхлать телейлĕ канăçа.
Куççуллĕ хĕн-асапĕ урăх
Таптаймĕ пирĕн пурнăçа.
Пӳртре сӳнми Илйич хĕвелĕ,
Чечекĕсем,—çуркунне пек.
Анне йурла-йурла, пит меллĕн
Тĕрлет уйав валли кĕпе.
Вăрманăн тунсăхлă кашлавĕ
Ун йурринчен хавасларах.
Аннем, ним шарламасăр лар ес,
Анчах ку йурăна—пăрах.
— Епĕ иртнине асаилетĕп,
Ылханлă, тертлĕ ĕмĕре.
Ахальрен мар парне тĕрлетĕп
Вуниккĕмĕш декабĕре.
Çĕр тĕслĕ лентăлă йаш-кĕрĕмĕ
Манран ан сивĕнтĕр тесе,
Çак кĕпепе васкавлăн кĕрĕн
Суйлав çуртне, хĕпĕртесе.
Илемне мар, пылне пăхаççĕ
Чечек çинчи пылхурчĕсем.
Сăмахне мар, ĕçне пăхаççĕ
Çынна суйланă чух. Етем
Тăван çĕршывăма йураттăр
Хăй амăшне йуратнă пек.—
Çавна халăх ĕçне шанатпăр,
Çавна суйлатпăр тивĕçпе.
Кĕрекере çак кун калаçăп:
Телей вăл—Сталин пур çĕрте.
Сывă пултăр аслă Совет влаçĕ!
Пĕр уншăн ал çĕклетĕп еп.
Еп савăнса сăвă çыратăп
Пурнăç чечекленни çинчен,
Илемлĕрех мĕн сăвăран та,
Куллен çĕнелекен тĕнче.
Çамрăклăх пек паха, илемлĕ
Çак тĕнчене тăвакансем:
Ăçтан сана пăхса киленмĕн
Утмăл çулхи çамрăк аннем.
Ес вată мар—ман пекех çамрăк
Хăвăн ĕçпе, шухăшупа.
Хăй ывăлне ӳстернĕ амăш
Тантăш пекех пайан унпа.
Çăлкуç пек иурнăçĕ таптăр,
Йух анлăн, çамрăклăх, вĕре.
Манми Вуниккĕмĕш Декабĕр
Çуталĕ ĕмĕр-ĕмĕрех!

А. Васлийĕв.

Пысăк пулăшу илеççĕ

Шупашкар районĕнчи социаллă обеспечени пайĕ вăрçăра аманнă инвалидсене, ĕç инвалидĕсене тата çемйере тăрантаракан çуккисене 231 çынна кашни уйăхра 9.448 тенкĕ, çулталăкне 113.376 тенкĕ пенси парса тăрать.

И. Васлийĕв.

Морозăв хапрăкĕнчи стачкă

Роççийăра крепостной правăна пăрахăçа кăларнă хыççăн (1861 çул) çĕршывра промышлĕнăç капиталĕ хăвăрт аталанма тытăннă. 70-мĕш çулсенчех вырăс çамрăк рабочи клас вăранма, капиталиссене хирĕç кĕрешме тытăннă. 1870 çулта хăйар експлоатаци хĕснипе, хăйсен пурнăçĕ начарланса пынипе Петербургри Невски пир-авăр хапрăкĕнчи рабочисем забастовкă тунă. Тепĕр çултан Петербургри Крейнгольм мануфактуринче забастовкă сиксе тухнă. Çак забастовкăсем хыççăн ытти чылай забастовкăсем пулнă.

Рабочисен çак малтанхи выступленийĕсен характерлă уйрăмлăхĕ çакăнта пулнă: вĕсем пурте стихийлăн сике-сике тухнă, оборонăлă характĕрлă пулнă, вĕсенче организацилĕх пулман.

1875 çулта Одессăра рабочисен пĕрремĕш организацийĕ—„Южно-российский союз русских рабочих" организациленнĕ. Вăл Роççийăн кăнтăрĕнчи рабочисене капиталисăма хирĕç кĕрешмешкĕн пĕрлештерме тăрăшнă. Рабочисен çак организацине патша йĕрки çĕмĕрсе тăкнă, çавăнпа вăл организаци хăйĕн ĕçĕсене сарса йарайман. 1878 çулта Петербургра тепĕр организаци—„Северный союз русских рабочих" организациленнĕ, ку организаци пуçĕнче рабочисем столяр Степан Халтурин тата слесăр Виктăр Обнорски тăнă. Çак организаци стачкăсене хутшăннă тата Петербургри рабочисен капиталисăма хирĕç кĕрешӳне йертсе пынă.

Петербургри стачкăсем ĕнтĕ ытларах организациллĕн пулса пыраççĕ: рабочисем хăйсен економикăлă требованийĕсене организациллĕн кăларса тăратаççĕ, вĕсемшĕн çирĕпреххĕн тăрса кĕрешеççĕ. Рабочисем хушшинче чи малтанхи прокламацисем тухаççĕ, прокламацисем вĕсен кĕрешĕвĕ мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен ăнлантарса параççĕ. Рабочисем хушшинче йулташла туслă, пĕр кăмăллă пулассин туйăмĕ çирĕпленет.

Патша правитĕлстви стачкăсене активлăн хутшăннă çынсене хăйаррăн тыткалать. Стачкăра пулнă çĕршер рабочисене тĕрмесене хупса хураççĕ, катăргăна йараççĕ. Çапла патшан тискер аллине лекнисенчен пĕри ткач Петр Моисейенко пулнă, забастовкăсене хутшăннăшăн ăна 1879 çулта Çĕпĕре ссылка йанă.

1883 çулта ссылкăран таврăнсан вăл Орехово-Зуйевăра Морозăв хапрăкне ĕçлеме кĕнĕ, унта вăл Саввă Морозăв ывăлĕн Никольски мануфактуринчи паллă стачкăн организатăрĕ тата руководитĕлĕ пулса тăнă.

Çак стачкă, Роççийăри рабочисен йухăмĕн историне Морозăв хапрăкĕнчи стачкă йачĕпе кĕнĕскер, рабочи класăн кĕрешӳне организацисĕр, стихийлă выступленисем тăвас çул çинчен организацилĕ стачкăлă кĕрешӳ çулĕ çине çавăрнă пункт пулса тăнă.

Стачкă рабочисен материальнăй пурнăçĕ пит начарланса кайнине пула сиксе тухнă. В. И. Ленин хăйĕн „Что такое штрафы?" йатлă кĕнекинче Никольски мануфактурăри рабочисен пурнăçĕ çинчен çапла çырнă:

„1882 çултан пуçласа Морозăв ĕç укçине чакарма пуçланă, 1882 çула çитиччен пилĕк хут чакарнă. Çав вăхăтрах штрафсем хăйартарах та хăйартарах пулса пынă: вĕсем пĕтĕм хапрăк тăрăх ĕçукçин чĕрĕкĕ чухлĕ (ĕçлесе илнĕ пĕр тенкĕрен 24 пус штраф) пулнă, хăш чухне уйрăм рабочисен ĕçукçин çурри чухлех çитнĕ". (Ленин, т. 1, стр. 367).

Хапрăкра ĕçукçине уйăхра пĕр хут панă, çавна пула çемйелĕ рабочисен апат-çимĕçе конторăран çырса панă хутпа хапрăк лавкинчен кивçен илмеле пулнă. Хапрăк лавкисенчи апат-çимĕç йаланах начар тата калама çук хаклă пулнă.

Морозăв хапрăкĕнчи рабочисем çапла уççăнах çаратнине чăтайман, стачкă пуçланă. Стачкă тăвакансен пуçĕнче ткачсем Петр Моисейенко, Лука Иванов (Абраменко) тата Василий Волкăв тăнă.

Рабочисен çак групп, унчченех революцилĕ опыт илнĕскер, йанварĕн 5-мĕшĕнче Орехово-Зуйевăри трактирсенчен пĕринче 70 рабочийе пухнă. Пуху стачкă ыйтăвне сӳтсе-йавнă, ăна йанварĕн 7-мĕшĕнче пуçлама йышăннă. Тепĕр кунне те çавăн пек пуху туса иртернĕ. Рабочисем йанварĕн 7-мĕшĕнче ирхине стачкă пуçлама йышăнни çинчен хапрăк директăрĕ Дианăв пĕлнĕ. Стачкă тума парас мар тесе, директăр хапрăкăн пур алăкĕсем умне те лаша витисенче тата торф кăларнă çĕрте хурал ĕçре ĕçлекенсенчен хурал тăратса тухма хушнă, вĕсене чукмарсем тата лумсем тыттарнă. Вĕсене хапрăк алăкĕсем умне пуханса тăракансене салатса йама, рабочисене хапрăкала хăваласа кĕртме хушнă. Çапла майпа Дианăв забастовкă тума чарасшăн пулнă. Анчах вăл çапла хăтланниччен нимĕн те тухман. Петр Моисейенко хапрăка пырса кĕнĕ те пур рабочисене те картишне тухма чĕннĕ. Пуринчен те малтан пусма тĕртнĕ çĕрте ĕçлекенсем, унтан çип арланă çĕрте ĕçлекенсем тухнă. Вĕсем хĕçпăшалланнă хурала хăвăртах хуса йанă, икĕ ушкăна уйăрăлса, хапрăк поçолкин чи пысăк урамĕсем тăрăх утнă.

Хапрăк директăрĕ Дианăв телеграф тăрăх Владимир хулинчи (унчухне Орехово-Зуйево Владимирски губернин составĕнче пулнă) губернатăртан тата исправникрен пулăшу ыйтнă. Стачкăна пусарса лартма губернатăр, жандарм управленин начальникĕпе тата прокурорпа пĕрле, 4 рота салтак илсе пынă. Орехово-Зуйевăна пырса çитсен, вăл хăйпе калаçма рабочисен кашни казарминчен представитĕлсем илсе пыма хушнă. Ун патне 60 рабочине конвойпа илсе пынă. Илсе пынă рабочисенчен вăл забастовкă сăлтавĕсем çинчен ыйтнă. Рабочисем хушшинче пулнă Василий Волкăв: штрафсене пăрахăçа кăлариччен тата ĕçукçине хăпартиччен, рабочисене пусмăрласа мăшкăлакан администратăрсене йĕркене кĕртиччен рабочисем стачкă тума пăрахмаççĕ, тесе хăйулăн та татăклăн каланă. Губернатăр, кусем çинчен пурин çинчен те Морозăвпа калаççа пăхатăп, тесе суйа сăмах панă. Анчах рабочисем часах администрацирен çакна пĕлнĕ: фабрикант вĕсен требованийĕсене йышăнман, вĕсене йулашки виçĕ уйăх хушшинче илнĕ штрафсене таврăрса пама çеç килĕшнĕ. Морозăв фабрикантăн çак условийĕсем рабочисене хытă çиллентерсе тарăхтарнă. Çакна хирĕç ответлесе йанварĕн 9-мĕшĕнче рабочисем хăйсен „пĕлтерĕвĕсене" çыпăçтарса тухнă, вĕсенче рабочисем фабрикант условийĕсене йышăнма килĕшменни çинчен каланă.

Çав кунах рабочисемпе çар хушшинчи пĕрремĕш тытăçу пулса иртнĕ. Ирхине урамсене тухсан, рабочисем хапрăкри çип пĕветекенсен уйрăмĕ ĕçлени çинчен пĕлнĕ, çак предатĕлле ĕçшĕн çилленсе тарăхса, вĕсем штрейкбрехерсем ĕçлекен çурт патнеле утнă, ăна кирпĕчсемпе, чулсемпе пенĕ. Чĕнсе илнĕ çарсем çынсен ушкăнне салатса йанă, çапах та начальствăн çип пĕветнĕ çĕрте ĕçлеме чарса лартмала пулнă.

Губернатăр каллех хăй патне рабочисен уполномоченнăйĕсене чĕннĕ. Провокаци тăвасран, вожаксене арĕслесрен шикленсе, рабочисем калаçусем иртерме пĕтĕм массăпа пĕрле кайма шут тытаççĕ. Йанварĕн 10-мĕшĕнче ирхине кашни казармă умĕнче митингсем организациленĕ, вăл митингсенче стачкă вожакĕсем рабочисене хăйсен требованийĕсемшĕн çирĕппĕн тăма чĕннĕ. Кăнтăрла 2 сехетре стачкă тăвакансем хапрăк кантурĕ патне пынă, вара вĕсен уполномоченнăйĕсем губернатăра: штрафсене пĕтерсен кăна ĕçе çĕнĕрен тытăнатпăр, тесе каланă. Морозăв фабрикант рабочисен требованийĕсене каллех йышăнман.

Хапрăк поçолкин урамĕсене каллех рабочисем тухса тулнă. Хапрăк тулашĕнче пуханса тăнă пысăк ушкăн патне казаксемпе пĕрле губернатăр пынă та çапла каланă: рабочисемпе калаççа пĕтернĕ тесе шутлатăп, тенĕ, кивĕ хаксемпех, кивĕ условисемпех ĕçе тухма хушнă; çав условисемпе килĕшменнисем расчет илме пултараççĕ, тенĕ. Çынсен ушкăнĕ протест çĕкленĕ. Волкăв тата Шалухин рабочисем хут çине çырнă требованисене губернатăра панă; çак требованисенче рабочисем: епĕр халичченхи условисемпе ĕçлиместпĕр, расчет илместпĕр, тенĕ. Çакăн хыççăн губернатăр казаксене Волкăвпа Шалухина арĕслеме хушнă. Арĕсленĕ Волкăв йулташĕсене çапла кăшкăрса каланă:

— Пире капиталиссемпе калаçма йурамасть!

Рабочисем арĕсленĕ йулташĕсене çăлса йулас тесе тапраннă, анчах казаксен отрйачĕ вĕсенĕ хĕссе кайала чакарнă. Вĕсенчен пĕр пайне (51 çынна) хупăрласа илсе арĕсленĕ, ыттисене казаксем салатса йанă. Анчах рабочисем çийĕнчех казармăсем умĕнче çĕнĕрен пухăнма пуçланă, унтан вара кантур патнеле утнă.

Рабочисен пĕр пайĕ Моисейенко йертсе пынипе казаксен çаçĕсен айккисемпе çаврăнса пырса, арĕсленĕ йулташĕсем ларакан вырăн патне пырса çитнĕ, часовойсене хĕçпăшалсăрлантарнă та, хăйсен йулташĕсене ирĕке кăларнă. Хурала пулăшма пырса çитнĕ çарсене стачкă тăвакансем хупăрласа илнĕ, çарсем нимĕн тума пĕлмесĕр аптăраса ӳкнĕ. Çакăнпа уçă курса тата, çарсене хирĕç ал вĕççĕн çапăçма пуçласа, хăйсен казармисем патне çĕмĕрсе тухнă.

Рабочисем 39 çынна арĕсрен хăтарнă, анчах вĕсен хушшинче Волкăв пулман. Ăна казаксен çур сотни тата 2 жандарм конвойпа вокзала илсе кайнă, унтан вара Владимирти тĕрмене ăсатнă.

Тепĕр кунне „ертеллĕ" казармăна çарсем хупăрласа илнĕ те, унта пурăнакансене пурне те арĕслесе хапрăк кантурĕн картине илсе пынă, вĕсем, авланман рабочисем, ытларах хăйулă, паттăр халăх пулнă. Вырăнти хапрăк администрацине çакна татса пама правă панă: кама Орехово-Зуйевăрах хăварма пулать, кама унтан

Колхозсенчи ревизи комиççийĕсене пулăшу кирлĕ

(Вăрнар районĕ, „Самолҫот“ колхоз)

Пирĕн колхозра иртнĕ кĕркуннеренпе те ревизи пулман. Малтан суйланă ревизи комиççи членĕсем тĕрлĕ çĕре кайнă.

Колхозăн тупăшĕсене валеçесси патне çитсен тин колхозниксем колхоза ревизи тумалине, колхозăн тупăшĕсене, расхучĕсене питĕ çирĕп тĕрĕслесе шута илмелине тавçăрса илчĕç. Вара колхозниксен пухăвĕ çĕнĕрен ревизи комиççи суйларĕ.

Халĕ ревизи комиççи хăйĕн ĕçне тытăнчĕ. Кашни кварталтах ревизи пулманнипе, комиççин пĕтĕм çулталăкри ĕçе кĕске вăхăтра тĕрĕслесе тухмала килет.

Ревизи комиççи членĕсен ĕçĕнче час-часах ыйтса пĕлмелисем, йăвăр ыйтусем сиксе тухаççĕ. Анчах районри çĕрĕç пайĕ (заведуйушчийĕ Смирнов йулташ) колхозсенчи ревизи комиççисене йертсе пымасть.

МТС-ре те районри çĕрĕç пайĕнче те колхозсенчи шут ĕçĕпе ĕçлекен инструктăр-бухгалтĕрсем пур. Анчах çак „хăнасене“ колхозсене чĕнсе илме йăвăр. Вăрманкассинчи „Самолҫот“ колхозран çĕрĕç пайĕнчи инструктăр-бухгалтĕр патне пĕре çеç мар пырса, ăна колхоза çитсе, ревизи комиççине вĕрентме ыйтнă. Çук, ăна чĕнсе илсе пулмарĕ.

Ревизи комиççи председателĕсене кăçал çĕрĕç пайĕ пĕре те пухса канашлу туса иртермен. Колхозри ревизи комиççи кадрĕсене вĕрентсе ÿстерессн, вĕсене партипе правительствăн решенийĕсемпе паллаштарасси—Вăрнарти организацисемшĕн манна ĕç. Çĕрĕç пайĕнчен колхозсене пыракан йулташсем сахал мар ытти ыйтусемпе интересленеççĕ, колхозри ревизи комиççийĕн ĕçĕсем çинчен нихăçан вăхăтра та сăмах хускатмаççĕ.

Пирĕн шутпа, Вăрнар районĕнчи çĕрĕç пайĕн колхозсенчи ревизи комиççисене пулăшма халех тытăнас пулать.

Ив. Гаврилăв.

Ревизи пулман çĕрте

СĔНТĔРВĂРРИ. Аслă Ăстакасси йалсоветне кĕрекен „Большевик“ колхозра ревизи комиççи çукки çулталăк çитет ĕнтĕ. Çавна май, колхоз правленийĕ ĕçсене тĕрĕслемессĕ. Колхоз председателĕ [illegible] мар, мĕнле килнĕ çапла усă курать.

1937 çулта ĕçкунĕсем тăрăх 30-шер пус укçан валеçĕннĕ, анчах та колхозниксенчен чылайĕшĕсем ку вăхăтченех ĕçкунĕсем çине пĕр пус та илмен.

Кăçал колхоз шыв арманĕпе çăм тапттармалли машинăран 3 пин тенкĕ тупăш илнĕ, анчах та укçи [illegible] ăçта кайни паллă мар.

„Колхоз правленийĕ колхозник-[illegible].

„Большевик“ колхозри çитменлĕхсем çинчен районти работниксем пĕлеççĕ пулин те, нимĕнле мера та йышăнмаççĕ.

А. Долгов.

„Осоавиахим“ колхозра

Патрекел (Йĕлчĕк р.) йалсоветне кĕрекен „Осоавиахим“ колхоз агротехникăла ĕçсене аван пурнăçа кĕртсе пынипе çулсеренех тухăçлă, вăйлă тырпул туса илет. Çавна май, колхоз организацийе хуçалăх тĕлĕшĕнчен ÿссе, тĕрекленсе пырать. Кăçал колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçленипе тырпул начарах туса илмерĕç. Ĕçкунĕсем тăрăх тĕштырă тата укçан валеçсе панисĕр пуçне, пахча-çимĕçсем 2-шер килограм таран валеçсе параççĕ.

Колхоз государствă умĕнчи облазательствисене тахçанах тултарнă. Государствăна аш-какай сутнипе колхоз кăçал автомашинă туйанчĕ.

Колхозра сысна тата ĕне фермисем пур. Фермăсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государствă планне тултарнă. Çавнашкалах ĕне усраман хуçалăхсем те сахалланса пыраççĕ.

„Осоавиахим“ колхозăн клуб, оборонă çурчĕ, икĕ çил арманĕ т. ыт. те пур.

Колхозниксем кăçал пысăк тупăш илеççĕ. Вĕсем хальхи йалпо магазинне тăхăнмалли тумтирсем, патефонсем, велосипедсем тата ытти йапаласем кÿрсе килме заказ параççĕ.

А. Палашкин.

Çĕрулми хатĕрлевĕ

Анаккасси колхозĕ йулса пырать

Анаккассинчи (Ишлей р.) „Коммунист“ колхоз кăçал государствă умĕнчи облазательствисене тултарас тĕлĕшпе кайа йулчĕ. Колхоз ку вăхăтченех 6 центнĕр çĕрулми парса татман. Колхозниксем хушшинче те государствăна çĕрулми парса татманнисем чылай. Çавнашкалах йединоличниксем те йулса пыраççĕ. Йал уполномоченнăйĕ М. Смирнов государствăна çĕрулми пачах паман. Çĕрулми хатĕрлевне хăйĕн организацилесе, йертсе пырас чухне, Смирнов ку ĕçе пăтраштарса, государствăна хирĕçле шухăш сарать. И. Студенцов тата Н. Краснов та çĕрулми памасăр тăраççĕ.

„Коммунист“ колхоз государствăна пайанхи кунччченех сĕт-каштăр пама тытăнман. Укçа-тенкĕ пухас ĕç те йулса пырать.

Анаккасси колхозĕн государствă умĕнчи облазательствисене вăхăтра тултарса пырас пулать.

П. Т. Рыков.

кăларса йамала. Унтан кăларса йама 601 çын суйласа илнĕ.

Морозăв хапрăкĕнчи ткачсен паттăр та çирĕп, геройла кĕрешĕвĕ Мускавпа Владимир губернисенчи ытти хапрăксемпе саватсенчи рабочисене те çĕкленĕ, ун çине пĕтĕм çĕршыв куç илмесĕр пăхса тăнă. Стачкă тăвакансене кăларса йани те, 50 çынна суда пани те (икĕ процес: пĕри—17 рабочине суд туни, иккĕмĕш—33 рабочине суд туни) Морозăв хапрăкĕнчи рабочисен моральлĕ пысăк çĕнтерÿне йавашлатма пултарайман.

„Çак питĕ пысăк стачкă,— тесе çырнă В. И. Ленин,—правительствăна пит вăйлă впечатлени тунă, вăл рабочисем пĕрле кĕрешнĕ чух, уйрăмăнах пĕрле кĕрешекен рабочисен масси хăйĕн требованийĕсене уççăнах кăларса тăратнă чух рабочисем мĕнле хăрушă вăй пулса тăнине курса илнĕ. Рабочисен вăйне фабрикантсем те туйса илнĕ, асăрханарах хăтланма пуçланă. „Новое время“ хаçатра, сăмахран, Орехово-Зуйеваран çапла çырнă: „Пĕлтĕрхи погром (уракла каласан 1885 çулта Морозăв патĕнче пулнă погром) çакăн пек выртăн йышăнса тăрать: вăл Орехово-Зуйеври хапрăксенче те, çавăн пекех таврара та хапрăксенчи кивĕ йĕркесене сасартăках улшăнтарчĕ“. Апла пулсан, рабочисем пĕрлешсе киревсĕр йĕркесене пăрахăçа кăларма ыйтсан, вăл йĕркесене Морозăв хапрăкĕн хуçисен çеç мар улăштармала пулнă, унпа кÿршĕлĕ фабрикантсем те хăйсен патĕнчи прогромсенчен хăраса, уступкăсем пама пуçланă. „Тĕп вырăнта тăраканни вăл,—çырнă çав хаçатрах,—çакă пулать: халь ĕнтĕ рабочисем çине ытларах етемле пăхма пуçларĕç, çакăн пек пăхакан хапрăк администратăрĕсем халиччен сахал пулнă“.

„Московские ведомости“ хаçат та (ку хаçат йаланах фабрикантсене хÿтлет тата пуриншĕн те рабочисене хăйсене айăплать) кивĕ йĕркесене сыхласа усрама май çуккине йăлăнса илнĕ, унăн та: хуçасем хăйсен ирĕкĕпе хуракан штрафсем —„киревсĕр усал ĕçсем тăвасси патне илсе пыракан сийен“ пулса тăраççĕ, „хапрăксен лавкисем— чăн-чăн çарату“ тесе, çавăнпа та, штрафсем çинчен саккун тата правиласем кăлармала тесе, çырмала пулса тăнă“. (Ленин, т. 1, стр. 368).

Морозăв мануфактуринчи рабочисен суд процесĕ хапрăкра чăтма çук киревсĕр експлоатаци пулнине уçса панă, вара присяжной заседателсен ирĕксĕрех айăплана кансене пурне те тÿрре кăларакан пригавăр йышăнмала пулнă.

Рабочисен çĕнĕ пăлханăвĕсем хăратса тăнипе патша правительствин 1886 çулта хапрăк саккунĕ кăлармала пулнă, вăл саккунăн чылай пункчĕсене тÿрех Морозăв хапрăкĕнчи ткачсен требованийĕсенчен илсе çырнă. Çак саккун фабрикантсене штраф хурса илнĕ укçа-тенкĕне рабочисен хăйсен нушисем валли пама хушнă.

Морозăв хапрăкĕнчи стачкă Российари рабочисен йухăмĕн историне рабочи класăн организацилĕ революцилĕ кĕрешĕвĕн пуçламĕш тапхăрĕ пулса кĕнĕ.

Çак вăхăтран пуçласа рабочисен йухăмĕ ытларах та ытларах организацилĕ кĕрешÿ çулĕ çине кĕрсе пынă. Пирĕн çĕршыври рабочи клас тунă аслă çĕнтерÿсене чылай ăрусем, çав шутрах Морозăв хапрăкĕнчи ткачсем, 1885 çулта рабочисен аслă ĕçĕшĕн геройла çапăçнă ткачсем те кĕрешсе илсе пынă.

Б. Закс.

Чăвашсен педагогикă институтĕнче IV-мĕш курсра вĕренекен студент Самуил Мозйаков йулташ „урокра. Сылтăмра—пединститут преподавателĕ Миловидăв йулташ.

Г. Костин фото-ÿкерчĕкĕ.

Колхозлă йалăн культурлăхĕ

(Редакцине килнĕ çырусем тăрăх)

Халĕ пĕтĕм çĕршыв халăх переписне хатĕрленет. Хапрăк-саватсенче, йалсоветсенче, колхозсенче, вулав çурчĕсемпе клубсенче перепис кĕтесĕсем уçнă. Пропагандиссемпе агитаторсем [illegible] çĕршывăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен халăха [illegible] параççĕ.

[illegible] нех улшăнчĕ. Ĕлĕкхи йединоличниксен вак-тĕвек хуçалăхĕсем вырăнне, социализмла шултра хуçалăхсем—колхозсем ÿссе тĕрекленчĕç. Колхозла пурнăçра ĕççынни хресчененсем хăйсен телейне тупрĕç. Йалта та, хулара та—çĕршывăн пур кĕтесĕсенче те телейлĕ пурнăç чечекленет. Пирĕн корреспондент Исайĕв йулташ йалта культурлăх ÿссе пыни çинчен çапла çырса пĕлтерет:

„Атнаш йалĕнче (Шăхасан р.) культурлăх куллен-кун ÿссе пырать. Хĕрĕх çултан çамрăккисем пурте хутла пĕлеççĕ. Йалта хут вĕреннисен шучĕ ÿссех пырать. Хальхи вăхăтра йалти çынсенчен çичĕ учитĕл, пĕр агроном, çирĕм икĕ трактăрист, пĕр трахом работникĕ, тĕрлĕ учрежденисенче ответлă ĕçсенче ĕçлекенсем хĕрĕх çын вĕренсе тухнă. Халăх сывлăхĕ тĕрекленсех пырать, трахом чирне пĕтерне. Кăçал 18 çамрăк Хĕрлĕ Çар ретне йурăхлă пулчĕç“.

Ĕлĕк пупсемпе пуйансем тата чиркÿсем урлă халăха улталаса пурăннă. Шкулсен алăкĕсем пуйансен ачисемшĕн çеç уçă пулнă. Ĕçхалăхĕ темиçе ĕмĕрсем хушши çĕр пÿртсемпе хура пÿртсенче пурăнса иртернĕ. Халĕ колхозниксем улта çтеналă шурă пÿртсем лартаççĕ. Колхозниксем пÿртсене архитектурă тĕлĕшĕнчен те хулари пекех лартма вĕренчĕç. Колхозниксен килне тĕрлĕ музыка инструменчĕсем, хаçат-журналсем, кĕнекесем кĕчĕç.

[illegible] (Вăрнар р.) колхозсенче культуралăх ÿссе пырать. Колхозниксен 15 çынăн хуткупăс, 35 çынăн балалайкă, 15 çынăн гитарăсемпе мандолинăсем, пĕр çынăн ройаль, 6 çынăн радиоприйомник тата ытти те пур“,— тесе пĕлтерет Ан. Крислов йулташ.

Хуласенче кăна мар, колхозла йалсенче те интеллигенци йышĕ хăвăрт ÿссе пырать. Мих. Александрăв çырса пĕлтернĕ тăрăх:

„Именкасси йалĕнчен (Трак р.) тĕрлĕ учрежденисенче ĕçлекенсем 90 çын ытла. Вăл шутра учителсем 27, врачсемпе фельдшĕрсем, трахçестрасем, акушеркăсем тата ыттисем 13, судпа прокуратурă органĕсенче ĕçлекенсем 9, кооператив организацисенче 8 çын ĕçлеççĕ тата ыт. те“.

Коммунистсен партипе совет правительстви ĕççыннисене вĕренсе тĕрлĕ специальнăç илме пур майсем те туса панă. Çавăнпа ĕнтĕ чăваш халăхĕ хушшинче те интеллигенци йышĕ, вĕреннĕ çынсен йышĕ ÿссе пырать. Социализмла культурă ÿсет.

Пулас перепис совет çĕршывĕ культурă йенĕпе пысăк ÿсĕм тунине лайăх кăтартса парĕ.

7 уйлă пусуçаврăнăшĕ çинчен

Çĕрпÿ районĕнчи нумай колхозсем 7 уйлă пусуçаврăнăшĕ çине куçнин чылай пулать. Анчах çав пусуçаврăнăшне ку вăхăтчен те кирлĕ пек йĕркелесе çитерейmен.

Пирĕн, „Балтиец“ колхоз 7 уйлă пусуçаврăнăшĕ çине 1933 çулта куçнă. Апла пулсан та ку пусуçаврăнăшĕ пирĕн тĕрĕс йĕркеленсе пыраймасть. Уйрăмах нумай çул хушши ÿсекен курăксем акăнмаççĕ. Çавна май, вара пирĕн колхозра выльăх апачĕ çителĕклĕ таран туса илме май пулман. Çавнашкалах тырпул тухăçлăхне ÿстерме пăтраниса пĕтнĕ 7 уйлă пусуçаврăнăшĕ пирĕн колхозшăн килĕшÿлĕ мар. Вăйлă тырпул туса илес тесен агротехникăлă ĕçсене пурнăçа кĕртсе пымала. Ирхи çĕртме тусан пирĕн колхозра выльăхсен кĕтÿне çÿретмелли вырăн пачах та йулмасть. 7 уйлă пусуçаврăнăшĕпе тĕштырăсем черетленсе акăнса пыман.

Епĕр колхозниксен пухăвĕнче хальхи пусуçаврăнăшĕн çитменлĕхĕсем çинчен теплĕн сÿтсе-йавнă. 7 уйлă пусуçаврăнăшне çакнашкал йĕркепе йышăнтăмăр. Кашни çуллен 2 пусăра ыраш акса хăвармала, 2 пусă çурăра çурхи тырăсем, çур пусăра викка утăлăх акмала, икĕ пусăра—çуршар пусă 1-мĕшпе 2-мĕш çулхи клевĕр çулса илмеле. Кашни çулленех клевĕре ыраш калчи çине çуршар пусă акмала пулать. Çапла вара клевĕре пĕр пусă çинчен, çур пусă çинчен викка утăлăх çулса илсен, пирĕн выльăх апачĕ çителĕклĕ пулма пултарать.

Колхоз председателĕ И. Михайлăв.

„Алино“ колхоза сыватмала

Ишлей районĕнчи „Алино“ колхоза улта йал пĕрлешнĕ. Колхоз çумĕнче партипе комсомол организацийĕсем пур. Колхоз председателĕ пулса ПСК(б)П членĕ Алферăв ĕçлет. Çав колхозранах районри организацисенче 9 çын таран ĕçлеççĕ. Шутпала „Алино“ колхоз районра лайăх ĕçлекен колхозсенчен пĕри пулмала пек. Чăн та, пĕр хушăра унăн йачĕ пĕтĕм республикĕпе сарăлнăччĕ. Анчах, колхоз председательне А. Алферăва суйласа лартнă хыççăн, колхоз пур ĕçсем тăрăх та йулса пыма тытăнчĕ. Алферăв пĕтĕм ĕçе административлă йеркесемпе туса пыма пуçларĕ. Самокритикăна пугарса лартрĕ. С. Белков бригадир А. Алферăв çитменлĕхĕсене критикленĕ пулнă, çавăн хыççăн С. Белков бригадире пĕр хут правленилерăвĕнче пулманшăн 5 ĕçкунĕпе штрафланă.

Кăçал „Алино“ колхоз витесем тума Атăл тăрăх 650 кубла метр йăвăç илсе аннă. А. Алферăв çав йăвăçа колхозниксенчен ыйтмасăрах, вăрттăн, хăй арăмĕн пиччĕшне панă, ытти колхозсене сутнă. Кусемсĕр пуçне Алферăвпа Серебрйакова йулташсем колхоз вальли кÿрсе килнĕ йăвăçсенчен хăйсене вальли пÿртсем лартнă. Арман пĕвелеме кÿнĕ çапăран Алферăв хăйĕн шăллĕне икĕ лав çапă панă. Иртнĕ кĕркунне Шуркасси колхозникĕсем вите çине витме тесе 25 пине йахăн кĕлте хăварнă пулнă. Витене виттермен пирки кĕлтесене вăрласах пĕтерне, йулашкине арман пĕвеленĕ çĕре илсе анчĕç. Иртнĕ çуркунне подвалсенче çĕрулми нумай çĕртсе йанă. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадăсен итемĕсем çинче 80 лав таран варлăхлăх клевĕр çĕрсе кайнă. Çав вăхăтрах, колхоз государствăна халиччченех 11 центнĕр ытла клевĕр вăрри парса татайман. Çавнашкалах государствăна укçа-тенкĕ тÿлес йенĕпе те йулса пырать.

Колхоз председателе колхозниксемпе пĕрлешсе ĕçлемест, вĕсем каланине итлемест. Çавăнпа та колхозра пысăк йĕркесĕрлĕхсем пулса пыраççĕ.

Алферăв колхоз председателĕ пулса ĕçлеме пултараймасть. Районри организацисен „Алино“ колхоза сыватмала, ăна куллен ĕçре пулăшса пынипе малта пыракан колхозсен ретне кăларма тарăшмала.

Н. Соломудрăв.
И. Белков.
А. Добрынин.

Йун йарса сыватас ĕç

Чирлĕ çынна йун йарса сыватасси çинчен тухтăрсем ĕлĕк авалах шутланă. Сăмахран, 1492 çулта Рим папи Иннокенти VIII хăй пурнăçне вăрăмлатас шутпа йун йартарнă. Анчах ĕç ăнăçлă пулман пирки вилнĕ, йун йаракан тухтăрĕ вара тарса хăтăлнă. Çакăн пек йун йана хыççăн вилнисем историре сахал мар пулнă. Анчах мĕншĕн апла пулнă-ха вăл?

Ĕлĕкхи тухтăрсем çын йунĕ миçе тĕслĕ пулнине пĕлмен. техникă çинчен каласси те çук. 1901 çулта кăна Ландштейнер пур тĕслĕ йуна та пĕрле хутшăнтарма йурамаине çине кăтартса панă. Епĕр халь йун тăватă группăна уйăрăлнине лайăх пĕлетпĕр. Çав тăватă группăран пĕр группи—пĕремĕш группи кăна пур çынна та йама йурăхлă; иккĕмĕш—иккĕмĕш йе тăваттăмĕш группăлă çынна (астăварах) йурăхлă; виççĕмĕшĕ — виççĕмĕшпе тăваттăмĕшне; тăваттăмĕшĕ — хăй пек группăна кăна. Сăмахран, тăваттăмĕш группă йуна пĕрремĕш группăлă çынна çителĕклĕ йарса парсан, вăл вилет, мĕншĕн тесен йун çывăрса ларать (свертывается). Ку мĕнрен килнине пĕлес тесен агглютиногенсемпе агглютининсем çинчен пĕлес пулать, епĕр ун çинчен кунта чарăнса тăмăпăр.

Палла, илнĕ йун часах çывăрса ларать, ун пек йуна çынна йама çук. 1914 çулта Гюстен йун çывăрнипе кĕрешме йуна лимонокислый натри хушма сĕннĕ. Йун йа-[illegible] 100 грам йун çине 4 [illegible] лимонокислый натри 10 грам хушсан, ун пек йун, тивĕçлĕ вырăна лартсан, ерни-ернипе пăсăлмасăр ларма пултарать.

1926 çулта Мускавра йатарласа йун йарас тĕлĕшпе ĕçлекен институт уçăлнă. Çакăн хыççăн Совет Союзĕнче йун йарас ĕç питĕ хăвăрт сарăлса пырать.

Йанă йунăн усси мĕнре-ха? Чи малтан, вăл организма çитмен йуна тултарма пулăшать. Шутласа кăларнă тăрăх, йарса панă хĕрлĕ йун шарикĕсем (еритроцитсем) организмра 30 кун таринччен пурăнма пултараççĕ. Организмра нимĕнле шĕвек те кун чухлĕ тăма пултараймасть. Тепĕр йенчен, йарса панă йун клеткăсене тата вĕсем урлă пĕтĕм организма активлатать, паттăрлантарать.

Палла ĕнтĕ, йун йарса сыватакан чирсем нумай. Чи малтан амакса-мĕн туса йун çухатнă хыççăн пит усăллă. Кун пек чух нумай пульницăсенче (йун йарас ĕçе пуçламан вырăнсенче) физиологи растворне йараççĕ. Анчах вăл пурнăçа 2—3 сехетлĕхе кăна тăсать, çын 90 проц. таранччен йун çухатнă пулсан та йун йарсан чĕртме пулать. Унтан, чирлесе вăйран кайнă çынсене йун йарса парсан хăвăрт ура çине тăратма пулать. Пиçсе кайсан, малокровирен тата ыт. йун йарса пани усăллă. Пур чире шутласа та тухас çук, йулашки вăхăтра скарлатинă чирне те йун йарса сыватаççĕ.

Чăваш республикĕнче йун йарас ĕçе чи малтан Кузнецов тухтăр 1935 çулта организациленĕ. Малтанхи çулĕнче 25 çынна кăна йун йанă пулсан, кăçалхи çул 240-рен иртет. Виçĕ çул хушшинче Шупашкар пульницинче сахал мар çынсене пĕр йун йанипе кăна чĕртнĕ. Вĕсенчен пĕрне кунта асăнма та тивĕçлĕ. Вăйран кайнă çынна операци тума тăрсан лешĕ сĕтел çинчех сывлама чарăнать. Пĕр-ик тухтăр вăйпа сывлаттарма тытăнаççĕ, çав вăхăтра тепри йун йама тытăнать. Çуррине йанă çĕре çынăн пичĕсем хĕрелме пуçлаççĕ, йарса пĕтернĕ çĕре калаçма пуçлать. Паллах, йун йаман пулсан пурнăç çинчен сăмах та пулма пултараймасчĕ, йун йанипе çын сывалса тухса пайан кун та ĕçлет.

Йунлă варвиттирен, вар тифĕпе пĕтсе кайнă çынсене йун йарса сахал мар чĕртнĕ. Йунлă варвитти чухне йун йарсан часах çынăн йунлă тухма чарăнать. Вар тифĕпе йе ытти чирсемпе начарланнă çынсем часах аппетит вăйланни çинчен калаççĕ. Çакăнтан ĕнтĕ, йун йани чирлĕ çынăн пульницăра выртас срукне хытă чакарни курăнсах тăрать.

Шупашкар пульницинче йун йарас тĕлĕшрен ăслăлăхлă сăнавсем туни те пур. Çÿлерех епĕр пур çын йунĕ те пур çынна йурамасть терĕмĕр. Анчах сахал (5—10—15 грам) йани вĕлермест, тепĕр чирсенче усăллă та. Сăмахран, суран сем вăрахăн тÿрленсе пынă чух, çăпансем тухсан тата ыт. çавăн пек чирсенче епĕр килĕшмен йут группăлă йуна (сăмахран, 1-мĕш группăна 4-мĕш группă) виçĕ хутчен (вăтамран 5 грамран пуçласа 10 грама çитиччен) йарса паратпăр. Кун хыççăн çынăн пичĕ хĕрелет, температури ÿсет, хăшпĕр чух чĕтретсе илет т. ыт. Анчах вăл хăрушă мар, часах иртсе кайать. Унăн çав йарса панă йут группăлă йун чирпе кĕрешме „кахалланнă“ организма активлатса йарать, вара чир час тÿрленет. Çăпансем уйрăмăнах хăвăрт тÿрленеççĕ. Кун пеккисене 100 йахăн сăнанă. Йулашки вăхăтра Шупашкар пульницинче хăшпĕр куç чирĕсене те йун йарса сыватма сăнав пуçласа йанă. Малтанхи опытсем ăнăçлă пыраççĕ. Нимĕнле имçам пулăшман çĕрте йун самайах çăмăллатать.

Илнĕ йуна сыхласа усрасси пысăк ĕç. Вăл вăрçă вăхăтĕнче пушшех питĕ кирлĕ. Çавнашкалах, хатĕр йун пурри пульницăсенче те пит усăллă. Шупашкар пульницинче çакна тума пĕтĕмпех вĕренсе çитнĕ. Йунсене ледникре 15 кун таранччен тытаççĕ. Кирлĕ пулсан донор шырас хуйăх çук. [illegible] та, [illegible] кăна.

Пĕр-ик сăмах донорсем çинчен. Донор хăй йунне панипе государствă умĕнче пысăк паха ĕç тăвать, мĕншĕн тесен пирĕн государствăшăн кашни ĕççынни пурнăçĕ хаклă. Йун пани сывлăхлă çынна сийен тумасть, илнĕ йун часах тулать. Донор пулма кирек хăçан та илеççĕ, илнĕ йуншăн çителĕклĕ укçа тÿлеççĕ, сывлăхне тухтăрсем сăнаса тăраççĕ.

Шупашкар пульницинчен йун йарас ĕçе чылай тухтăрсемпе сестрасем вĕренсе кайнă. Анчах çапах ку ĕç çителĕклĕ теме çук. Пайанхи куна йун йарас ĕçпе хирургсем кăна ĕçлеççĕ пулсан, çитес вăхăтра кашни тухтăрах (кирек мĕнле специальнăç пулсан та) вĕрентмеле. Пуринчен ытла йун йама пĕлни участкăсенчи тухтăрсене кирлĕ. Йăвăр аманнă çынна пур чух та Шупашкара ăсатма çук, вырăнтах йун йарса парса сыватмала тăвас пулать. Ку тĕлĕшрен Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ йенчен ытларах пуçарса пыни кирлĕ.

Йун йаракан пунктсем хальхи республикăра çителĕклĕ мар, вĕсем пурĕ те 5—6 кăна. Кунта пĕр йенчен вырăнти организацисем те айăплă. Сăмахран, Иетĕрнери пункта миçе çул хушши укçа парса тăраççĕ, çапах пайан кунччен пĕрре те йун йарса курман. Районри сывлăх пайĕ кăна пĕлет пулин те, халиччен пĕр тухтăра та ку ĕçе хутшăнтараймасть.

Хăшпĕр пунктсем йуна сăнаса пăхакан лабораторисем çуккипе аптраççĕ. Сăмахран, Вассерман реакцине Шупашкарта, Улатăрта, Сĕнтĕрвăрриче тата Çĕрпÿре кăна тума пултараççĕ. Малашне вĕсене Канашра, Патăрйелĕнче, Йетĕрнере тата ытти çĕрте те организацилемеле.

Йун йарас ĕç оборонă тĕлĕшĕнчен те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кăна епĕр Испанири вăрçă примерĕнченех лайăх куратпăр. Унта йун йарас ĕçе йĕркеленипе çĕршер салтаксем срукчен сывалса фашизма хирĕç кĕрешме çĕнĕрен тăраççĕ. Ку апла пулсан, йун йарас ĕçпе пĕр тухтăрсен кăна мар интересленмеле. Сăмахран, райĕçтаркком председателĕн хăй районĕнче ку ĕçе йĕркелесси çинчен мĕншĕн шутласа пăхас мар? Мĕншĕн пĕр-пĕр тухтăра çак ĕçе вĕренме условисем туса парас мар? Сывлăх пайĕсен пушшех интересленмеле. Йун йама инструментсем те нумай кирлĕ мар, вĕсем çителĕклĕ пур, хаклă мар. РОКК ушкăнĕсене те донорсен шутне ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлесен чăрмантармĕччĕ. Ку вал РОКК организацин тăван ĕçĕ пулмала.

Çитес çулта республикăра йун йама пĕлмен пульницă йе тухтăр пĕрре те ан пултăр.

Врач К. ПАЙРАШ.

Ачасене пăхма пĕлмест

Ыхракасси йалĕнчи (Ишлей р.) чăпта çаптаракан ертел çумĕнче ачасен площадки пур. Анчах площадкă заведуйушчийĕ Пардасăва йулташ (вăлах ачасене пăхаканĕ) хăйне шанса панă ĕçе тивĕçлипе туса пымасть. Ачасем пурăнакан пÿлĕмре таса мар, пăчă. Ачасем тарласа ларнă хыççăн тула тухса чупса çÿреççĕ, чаракан çук. Вĕсене тĕрлĕрен вăйăсем, йурăсем вĕрентмеççĕ.

Пардасăва ачасемпе интересленмест. Çавна пула вăл вĕсене хĕнени те, кăшкăрни те пулкаланă. Çитменне тата ачасене вăхăт çитмесĕрех, кăнтăрла иртсен икĕ сехетрех, килĕсене йарать.

Чăвашпромкассăн площадкă ĕçне лайăхлатмала.

М. Галкинă.
А. Михайлăвă.

Йолкăна хатĕрленеççĕ

Палтай (Йетĕрне р.) вăтам шкулĕнче вĕренекен пионерсемпе комсомолецсем çĕнĕ çулхи йолкăна хатĕрленме тытăнчĕç. Йолкăна илемлетмелисем çителĕклĕ илсе хатĕрленĕ.

Йолкă пулас кас 7-мĕш класра вĕренекенсем „Ĕмĕтсем“ йатлă пйесă лартса параççĕ. Спектакль хыççăн шавлă оркестр хăйĕн пултарулăхне кăтартса парать.

Е. Обйездчикăв.

Китайри вăрçă

Центральнăй Китайра, пĕр ерне хушши лăпкă тăнă хыççăн. вăрçă ĕçĕсем çĕнĕрен пуçланнă.

Йапонĕçсем Синцзйан йуханшывĕн сурçĕр йенче наступлени тума пуçланă. Китай çарĕсем Йапони çар чаçĕсем хĕснине, хыттăн хирĕçнипе чарса тăраççĕ. Çапăçусем çаплах пыраççĕ.

Китай çарĕсем йапонĕçсене хирĕç хыттăн çапса, вĕсене Цзинчанран (Иочжоуран 15 километр кăнтăр-хĕвелтухăç йенчеле) хăваласа кăларнă.

Ухуран кăнтăр йеннерех. Ванчжи районĕнче, Китай çарĕсем Йапони позицисене ăнăçлăн атакăлаççĕ. йапонĕçсене Ванчжирен инçетре мар тăракан чылай вырăнсенчен хăваласа кăларнă. Ухупа Лучжоу хушшинчи пĕтĕм район тенĕ пекех (Нанкинран кăнтăр тата кăнтăр-хĕвеланăç йенчеле) Китай партизанĕсен контролĕнче тăрать. Ухуран кашни кун партизансене хирĕç кĕрешме Йапонин каратĕльнăй отрйачĕсем тухса кайаççĕ. Партизансене хирĕç артиллерипе, танксемпе, самолотсемпе тухаççĕ. Апла пулсан та йапонĕçсем ку районта Китай партизанĕсене парăнтарма пултараймаççĕ.

Кăнтăр Китайра хайар çапăçусем Самшуй тавра (Кантонран хĕвеланăç йенче) пыраççĕ. Кантонран çурçĕр йенче, Кантон — Ханькоу чукунçул тăрăх пыракан Йапони çарĕсем çурçĕр-хĕвеланăç йенчеле наступлени тăваççĕ. Йулашки çапăçусенче кунта Йапони чаçĕсем чылай çухатусем тунă.

Кантонран хĕвеланăç йенчи районсенче 100 пине йахăн партизансем тăраççĕ. Йапонĕçсене Гуанси провинцине пырса кĕме чарас шутпа. Гуанси провинци чиккине китайĕçсем çĕнĕрен 2 дивизи йанă.

Хальхи вăхăтра Китай çамрăкĕсем пурĕ 400 пин çынна йахăн çар ĕçне вĕренсе пĕтернĕ. вĕсем тăшмана хирĕç татăклăн çапăçма хатĕрленеççĕ.

(ТАСС).

Чĕртсе çунтаракан çĕнĕ бомбăсем

Англире чĕртсе çунтаракан çĕнĕ йышши бомбă туса хатĕрленĕ. Англи хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх. чĕртсе çунтаракан çĕнĕ бомба йавăрĕш йенчен илсен çăмăл, çав вăхăтрах пысăкĕш те пысăк мар. Пысăк бомбардировщик хăйпе пĕрле çак бомбăсене 2 пин таран илсе секундă хушшинче 20 штук пăрахма пултарать. Çĕнĕрен тунă чĕртсе çунтаракан бомбăна „килоелектрон" тесе йат панă. Çак бомбă ăшĕнче хăварттăн вут хыпса илекен магний пур. Бомбă çурăлса каймасть, анчах ăна пăрахсан. Цельçи тăрăх вĕри 1.300 градуса çитсе ирĕлнĕ магний шĕвекĕ 15 метр таран пĕрĕхсе тухать. Çак бомба пырса тивесрен 1/4 дуйм хулăнĕш хурçă плита, хăйар тултарса хунă михсенчен тунă хÿтлĕх йе 4 дуйм хулăнĕш тимĕр-бетон хÿтлеме пултарать.

(ТАСС).

Оборонă çурт пуçлăхĕсен канашлăвĕ

Декабĕрĕн 9-мĕшĕнче Кийĕвра оборонă çурт пуçлăхĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлăва пухăннă делегатсем йалта массăлă оборонă ĕçĕнче тунă çитĕнÿсене палăртнă.

Днепропетровск облаçĕнчи Петриков районĕнчи Коминтерн йачĕпе тăракан колхозри оборонă çурчĕ сывлăшран килсе тапăннинчен хÿтленекенсемпе Ворошиловла тĕл перекенсем 130 значкис хатĕрленĕ.

Кунта оборона кружокĕсем пурĕ çиччĕ. Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх тăтăшах лекцисем пулаççĕ.

Канашлу оборонă çурчĕсен ĕçĕсем çинчен положени çирĕплетнĕ. (ТАСС).

Чăваш АСС Республикĕнче 4-мĕш квартăлта укçа-тенкĕ пухас плана мĕнле тултарса пынине кăтартни

(Декабĕрĕн 11-мĕшне, процентпа)

РАЙОНСЕМ	Плана тултарнă
Улатăр	58,0
Елĕк	56,9
Патăрйел	42,0
Вăрнар	61,1
Йĕпреç	36,1
Ишлей	50,6
Канаш	46,0
Куславкка	55,1
Хĕрлĕ Чутай	53,8
Кувакинă	59,9
Сĕнтĕрвăрри	51,4
Пăрачкав	52,4
Турхан	47,3
Тутаркас	55,0
Трак	52,8
Вăрмар	39,5
Çĕрпÿ	53,6
Шупашкар	58,3
Шăмăршă	58,6
Шăхасан	54,0
Шăнкăртам	67,9
Çĕмĕрле	39,4
Йетĕрне	57,3
Йелчĕк	52,9
Тăвай	51,0
Улатăр хули	62,0
Канаш хули	70,7
Шупашкар хули	73,3
Республикĕпе	52,7

Шупашкарти Советсен çурчĕ.
Г. Костин фото-ÿкерчĕкĕ.

Вăрман хатĕрлевĕ

Лайăх ĕçлеме мĕн чăрмантарать?

Канаш вăрманпромхозĕн виççĕмĕш участкинче, руководительсем рабочисене кирлĕ пек ĕçлеме майсем туса паман пирки, вăрман хатĕрлес плана тултараси йулса пырать. Участкăра пуртăсем пачах çук, пăчкăсем мăка тата хăшпĕр пăчкăсен шăлĕсем катăк.

Хватерсем пирки те çаввах каламала. Бараксен ăшчиккисем таса мар, вĕри шыв çук. Пĕр барака тума пуçлани чылай вăхăт иртрĕ пулин те, паян кун та вăл хатĕр мар. Çак çитменлĕхсем пире ĕçлеме чăрмантараççĕ.

В. Константинăв.

Вăрмансене йухăнтараççĕ

Тутаркас, Ишлей тата Шупашкар районĕсен территорийĕсенче вак вăрмансем сахал мар. Вăрмансене асăрхаса тăма районсенче хуралçăсем уйарнă. Анчах чылай çĕрте хуралçăсем йапăх ĕçленипе, йулашки вăхăтра вăрман хуçалăхĕсем йухăнма пуçларĕç. Йанăш йалĕ тавралăшĕнчи икĕ вăрман участкинче йатамран шутласан йăвăçсене çурриве йахăн касса пĕтернĕ. Сыпай Анаткĕнер йалсоветне (Ишлей р.) кĕрекен вăрмантан та кăçал çĕр йуман ытла каснă. Кунти хуралçа Таньков вăрмана касасран сыхлама мар, хăй ĕçкĕле лавĕ-лавĕпе сутать.

С. Мамайĕв.

Халăх перепиçĕ умĕн

СĔНТĔРВĂРРИ. Халăх хуçалăх учочĕн районри инспектури пулас перепиçре ĕçлекенсене кĕске курссем урлă вĕрентсе кăларать. Халĕ Сĕнтĕрвăррипе Есмĕлте инструктăр-контрольорсене вĕрентсе кăларнă. Карайалĕнче, Шуршăлта тата Сĕнтĕрвăрринче счетчиксене пухса вĕрентеççĕ.

Анчах кунти хула совечĕ перепиçе хатĕрленме тытăнман-ха. Перепис ĕçĕнче пулăшас тĕлĕшпе организациленĕ комиççи нимĕн те тумасть. Хулари çуртсене халĕ те номĕрлесе тухман.

П. Сатур.
В. Ивле.

КÿКЕÇ. Шупашкар районĕ перепиçе кăтартулă иртерес тĕлĕшпе Куславкка районĕпе ăмăртăва тухнă. Ăмăрту догăвăрне пурнăçлассишĕн йалсоветсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Районра перепис ыйтăвĕ тăрăх докладсемпе калаçусем чылай çĕрте иртернĕ. Йалсоветсемпе колхозсем, вулав çурчĕсемпе клубсем, шкулсем çумĕнче перепис кĕтесĕсем организациленĕ.

Перепиçе Анаткас, Çĕвйал, Кочакова, Паникасси, Заводской йалсовечĕсенче лайăх хатĕрленеççĕ. Ку йалсоветсенчи колхозсенче йатарласа перепис ыйтăвĕпе стена хаçачĕсем кăларнă. Заводской йалсоветĕнчи комсомолец агитатăр Троицкий йулташ колхозниксен пухăвĕсенче виçĕ хут перепис çинчен ăнлантарса панă. Перепис çинчен агитатăрсем ăнлантарса параççĕ.

Çак кунсенче инструктăр-контрольорсем виçĕ кунлăх курсран вĕренсе тухрĕç.

Й. Ваçилйĕв.

Халăх перепиçĕ çинчен выставкă

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мăн Йамаш клубĕнче 1939 çулта пулакан Пĕтĕм Союзри халăх перепиçĕ йачĕпе выставкă организациленĕ. Выставкăра правительствă перепис çинчен йышăннă постановлени, перепис çинчен хаçатсенче пичетленсе тухнă статйасем, перепис иртерне чухне сырса тухмали бланкăсен образецĕсем т. ыт. материалсем те пур.

Толмачевский.

ЧАССР Верховнăй Совет Президиумĕн
УКАЗĔ

Г. М. Никитин йулташа Чăваш АССР Суту-илÿ Халăх Комиссарĕ пулма çирĕплетесси çинчен

Георгий Михайлăвич Никитин йулташа Чăваш АССР Суту-илÿ Халăх Комиссарĕ пулма çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЙĔВĂ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Çекретарĕ Г. ГУСĔВ.

Шупашкар хули,
1938 çулти декабĕрĕн 11-мĕш.

Çитĕннисене вĕрентес ĕç йулса пырать

Çитĕннисене вĕрентес тĕлĕшпе партипе правительствă панă кăтартусем пирĕн республикăри йалсенче, предприйатисенче халĕ те сÿрĕккĕн пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Çутĕç органĕсем хăйсем панă сруксемпе сăмахсене хиçеплемеççĕ. Панă сăмахсем пурте пушă сăмахсем пулса йулчĕç, сруксем иртсе кайрĕç.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлеме тивĕçлĕ чылай работниксем çак ĕçĕн политикăла пахалăхне ăнланса илмен. вĕсем социализм çĕршывĕнче, государствă ĕçне пĕтĕм халăх хутшăнма тивĕçлĕ чух. хутпĕлмен çын пулмала маррине ăнланмаççĕ.

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ кăтартса панă тăрăх, вырăнти çутĕç органĕсен пĕтĕм ĕçе 1939 çулти майăн 1-мĕшĕ тĕлне хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕмĕтпе организацилемеле. Çав майпа çутĕç органĕсен кăçалхи октăбĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне йалсенче. предприйатисенче çитĕннисен шкулĕсене йĕркелесе уçмалаччĕ. Анчах калас пулать, хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç республикăра çаплах йулса пырать.

Кун çинчен пирĕн редакцине куллен килсе тăракан çырусем калаççĕ. Акă, Ст. Филиппăв корреспондент çырса пĕлтерет:

„Канаш районĕнче хут пĕлменнисем 854 çын, хут сахал пĕлекенсем 2081 çын. Вĕсенчен вĕрентĕве халĕ пĕтĕмпе те 966 çынна çеç йавăçтарнă.

Районри çутĕç пайĕ ку ĕçе йĕркелеме тăрăшмасть.

Йамавкасси, Çĕнĕ Ахпÿрт, Асхва йалĕсенче çитĕннисене вĕрентме лайăхах тытăннă. анчах ку тĕлĕшпе ĕçлекенсене кирлĕ пек пулăшса пымаççĕ. Вĕренекенсем валли учебниксем тата ытти вĕревÿ хатĕрĕсем çитмеççĕ.

Йалмавчăра хутпĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 85 çын, Чакаçра—132 çын, Карăклăра—114 çын, Ватапуçĕнче—98 çын, çапах та çак йалсенче хальхи вăхăтра пĕр çынна та вĕрентмеççĕ".

Чылай çĕрте çитĕннисене вĕрентес ĕç çине „йăлăхтарнă ĕç" çине пăхнă пек пăхаççĕ.

„Тутаркас районĕнчи Шомик йалсоветĕнче хутпĕлменнисемпе сахал пĕлекен 44 çынран кăçал 7 çынна вĕрентсе кăларам пекки тунă. Вĕренсе тухнисен пĕлĕвĕсем питех те çителĕксĕр. Кунашкал тĕслĕхсем районра нумай. Районри çутĕç пайĕн пуçлăхĕ Табаков йулташ „хутпĕлменлĕх, хутпĕлменлĕх теççĕ, йăлăхтарчĕ ĕнтĕ вăл йапала" тесе калаçать. Пуçлăхсем ĕç çине çапла пăхни пĕтĕм ĕçе сÿрĕлтерет" тесе, çырать пирĕн Г. Петров корреспондент.

А-ă тата Т. Н. корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Иетĕрне районĕнчи Мăн Шемертен йалсоветĕнче хутпĕлменнисем 70 çынна йахăн шутланаççĕ. Вĕсене вĕрентесси çинчен никам та шухăшламасть. Районри çутĕç пайĕ, шкулсен ĕçне те начар йертсе пыракансkер, çитĕннисене вĕрентес тĕлĕшпе пачах та ĕçлемест.

Вĕренмесĕр йулакан çитĕннĕ çынсем Йетĕрне районĕнчи ытти йалсенче те нумай. Сăмахран, Мăн Йĕкĕт йалсоветĕнче хутпĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 120 çын ытла. Пырçырланти Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозра 70 çынна йахăн шутланаççĕ. Ку йалсенче те çитĕннисен шкулĕсене йĕркелемен. Районри йалсовечĕсем хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе хăйсен ĕçĕ тесе шутламаççĕ. Пире кун çинчен Т. Йарандайкин корреспондент çырса пĕлтерет.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçĕн политикăла тивĕçлĕхне ăнланса илнĕ çĕрте ку ĕçе, социализм строительствин ытти пысăк та ответлă ĕçĕсем пекех, тĕплĕн, тăрăшса туса пыраççĕ.

Акă, Вăрнар районне кĕрекен Йермошкă йалĕнчи вулав çурчĕн пуçлăхĕ Н. Абрамăв йулташ çитĕннисене вĕрентес ĕçе хăй çине илнĕ. Çитĕннисен вăл организациленĕ шкулĕ куллен йĕркелĕ ĕçлесе пырать. Шкула пĕтĕмпе 25 çын çÿрет. Вĕренекенсенчен С. Галкинă, С. Лаврова, Т. Громăвă тата ытти йулташсем „отлично" паллăсемпе вĕренеççĕ.

„Вĕревÿ ĕçĕнче йалсовет председателĕ Воробйов йулташ та аван пулăшса пырать. Вăл вĕренекенсене политикăлă ыйтусем çинчен, ĕлĕкхипе хальхи çинчен тата тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса парать", тесе çырать А. Владимирăв корреспондент.

Ĕçе большевикла тимлĕхпе тытăнсан, епĕр хутпĕлменлĕхе пĕтеретпĕрех. Партипе советсен вырăнти организацийĕсем, комсомолпа профсоюзсем, çутĕç органĕсем ку ĕçе политикăла ответлă ĕç вырăнне хурса йĕркелессине шанас килет.

ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн çитĕннисене вĕрентес йенĕпе ĕçлекен управленийĕ сводкăсем кăна пухакан управлени пулма пăрахмала пек ĕнтĕ. Унăн хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе тĕрĕс те тĕплĕн йертсе пымала.

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

„Суд исполнителĕпе прокурор йенчен пулăшу кăтартмаççĕ"

Елĕк районĕнчи Тури-Татмăшри Марийа Тихăнăвă „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцине çакăн пек çырса пĕлтернĕччĕ:

— 1937 ç. мартăн 11-мĕшĕнче епĕ ача çуратрăм,унăн ашшĕ райлесхозра ĕçлекен Мефодий Дубикăв. Алимент шыраса илес тесе епĕ Дубикăва суда патăм. Анчах та суд темĕнле сăлтавпа, алимента 1938 çулти мартăн 17-мĕшĕнчен кăна пуçласа шыраса илмеле турĕ. Çитменнине тата епĕ ку тарана çитсе те алимент укçине пĕр уйăхшăн çеç илнĕ. Судисполнитель Иван Толстов исполнительнăй листа Дубикăв аллине панă. Çав майпа та Дубикăв:—ĕçукçи илмен-ха, тесе алимент укçине тÿлемесĕр пурăнать. Çак ĕçре пулăшу ыйтма районри прокурор Краснов й. патне те виçĕ хутчен кайрăм, çапах та вăл мана пулăшу парас вырăнне, вăрçса çеç кăларса йачĕ.

Тихăнăвă йулташ жалăбине ПСК(б) Парти Елĕк райкомĕ тĕрĕслесе тухнă. Жалăбăра çырнисем тĕрĕс пулнă. Прокурор Красновпа судисполнитель Толстов çинчен комсомол йенĕпе ыйтăва сÿтсе-йавма ПСÇЛКС Елĕк райкомне тата Чăваш республикĕн прокурорне пĕлтернĕ.

„Ревком мар, шлепкесем"

П. йалкор Вăрмар районĕнчи Пысăк-Йенкассинчи „Трактăр" колхоз председателĕ Ваçилий Романăв колхоз укçине 400 тенкĕ салатни, ăна ревком председателĕ Филиппăв халĕ те хÿтлесе пурăнни çинчен çырса пĕлтернĕччĕ.

Çак заметкăна Вăрмар райçĕрĕç пайĕ тĕрĕслесе тухнă, Филиппăва ревком председателĕнчен хăтарнă, Романăва урăх ĕçе куçарнă.

„Йермошкăри йалпо уйрăмĕ"

Йермошкăри (Вăрнар районĕ) йалпо уйрăмĕнчи приказчик Çеменăв Никитă йалананах ÿсĕр çÿрени çинчен, лавкана килнĕ промтоварсене килне илсе кайса, хăйĕн сывăх тусĕсене сутни тата 560 т. растратă туни çинчен редакцине çыру килнĕччĕ.

Çырăва тĕрĕслеме Вăрнар райпотребсоюзне йатăмăр. Унтан: кăтартнă фактсем пурте тĕрĕс, Çеменăв Никитăна ĕçрен кăларнă, ĕçе суд аллине панă, тесе пĕлтерчĕç.

*

„Ăнлантарулă ĕçе вăйлатни кирлĕ, заметкă пирĕн хаçатра октăбĕрĕн 5-мĕшĕнче пичетленсе тухнă. Хатĕрлев халăх Комиссариачĕн Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйĕ заметкă пирки çапла пĕлтерчĕ:

„Ку заметкă тăрăх Хатĕрлев халăх Комиссариачĕн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи уполномоченнăйне— Льабукова кăтарту панă, агентсен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетни çинчен материал тăратма хушнă.

Канаш хулинчи, революцишĕн кĕрешсе вилнĕ йулташсене пытарнă масар çинчи памĕтник.
Г. Костин фото-ÿкерчĕкĕ.

Районри хаçатсем тăрăх

◆◆ Шетмĕпуç йалсоветĕнчи(Ишлей р.) „Çĕнĕ хував" колхозра ватă колхозник Антонăв йулташ кĕсле çинче питĕ чаплă выльать, вăл нумай кĕвĕсем пĕлет. Антонăв йулташ 72 çултан иртнĕ ĕнтĕ. Çапах та, вăл колхоз ĕçĕнче те çамрăксенчен йулмасть. Кăçал унăн çемйи ĕçкунĕсем тăрăх укçан кăна 750 тенкĕ илет. („Колхозник хаçачĕ").

◆◆ Çак кунсенче Мăн-Сĕнтĕрти интеллигентсен пухăвĕ пулса иртнĕ. Вăл пухура 150 çын пулнă. Унта ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ парти пропаганди çинчен йышăннă постановлени çинчен доклад итлесе сÿтсе-йавнă. („Ĕç йалавĕ").

◆◆ Пĕчченхыр йалĕнче (Сĕнтĕрвăрри р.) ĕçлекен трахçестра А. Степанăвă йулташ икĕ çул хушшинче 158 çынна трахом чирĕнчен сыватнă. Халь вăл йалта трахом чирĕпе чирлекенсен йышĕ чаксах пырать. („Ударник").

◆◆ Хачăкри (Ишлей р.) пуçламĕш шкулта ĕçлекен учитель Ваçилйĕв йулташ Иккĕмĕш Пилĕкçуллăх (4-мĕш çулхи кăларăм) заёмпа 750 тенкĕ укçа выльаса илнĕ. («Колхозник хаçачĕ»).

Зашчитниксем

Сталинла Конституци граждансен прависене сыхлассине пысăк вырăна хурать. Çавна май пирĕн Чăваш республикĕнче зашчитниксен шутне 40 çынран 60 çынна çитерчĕç. Зашчитниксен коллективĕ халиччен пĕрре çеç пулнă. халĕ ăна икĕ çĕрте—Канашра тата Шупашкарта уçрĕç.

И. СТЕПАНАВ.

С у д

Вăрттăн аборт тунăшăн

Нойабĕрĕн 20-мĕшĕнче Пăрачкавра суд пулса иртрĕ. Вăл судра Пăрачкавра вăрттăн аборт туса пурăннă Надежда Иванăвнă Демицинă ĕçне пăхса тухрĕç

Суд пуçланиччен суд ларăвĕн залне хĕрарăмсем питĕ нумай пырса тулчĕç. Свидетельсем тĕплĕн кăтартса панă тăрăх, Демицинă 1938 çулта çулталăкĕпех государствăна хирĕçле ĕçсем туса пурăнни палăрчĕ. Вăл абортсене хăй хватерĕнче туса пурăннă. Çакна тума медицинă ĕçĕпе нимĕн чухлĕ те вĕренменскер пулнă вăл. Демицинă çак ирсĕр ĕçе çăмăллăн укçа тупас майпа туса пынă. Аборт тутарма пыракан кашни хĕрарăмран 30-50-шар тенкĕ илсе йулнă. Çакăнпа вăл государствăна хирĕçле ĕç тунă, 1936 çулти иййунĕн 27-мĕшĕнче аборт тума чарасси çинчен правительствă кăларнă саккуна пăснă.

Пăрачкав районĕнчи халăх сучĕ çак ĕçе пăхса тухса, Демицинăна 8 çул хушши тĕрмере хупса усрамала турĕ.

П. И. Новикăвă.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче

Декабĕрĕн 15-мĕшĕнче ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ хулари финанспа шутĕç работникĕсем валли „Работа В. И. Ленина „Что такое „друзья народа" и как они воюют против социал-демократов" темăпа лекци иртерет.

Лекци каçхине 7 сехетре пуçланать.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ.

Хроникă

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Александр Георгийĕвич Иванов йулташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Суту-илÿ Халăх Комиссарĕн обйазаннăçĕсенчен хăтарнă.

Тÿрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн декабĕрĕн 12-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче, 1-мĕш страницăра, корректăрсем асăрхайманнипе, Корсикă утравĕ çинче пурăнакан халăх шутне йăнăш кăтартнă. Унта 3322.584 çын вырăнне 322.584 çын пурăнать, тесе тÿрлетсе вуламала.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Халăх пултарулăх çуртне

чăвашла та вырăсла та пĕлекен квалификациллĕ çекретар-машинисткă

ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ

Ĕçукçи—килĕшÿ тăрăх.
Телефон 7—13 йе 5—96

2—2

Мĕнпур хуçалăх, коопераци, промышленнăç, суту-илÿ тата транспăрт организацийĕсене

—ПĔЛСЕ ТАМА.

Шупашкар пристанĕ, догăвăр тăрăх, грузсемпе таварсене хăйĕн склачĕсемпе площадкисенче нумай срукăха тата кĕске срукăха сыхласа усрама йышăнать.

Сыхласа усранăшăн илекен тÿлев Шывçул транспăрт Халăх Комиссариачĕн тарифĕ тăрăх пулать.

Интересленекен организацисен çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле: ул. Кадыкова, д. № 22, контора пристани.

ВВРП пристанĕ.

2—2

Чăваш Аптекоуправлении

тĕп аптекă складĕнче АЛЛОСКОП текен пĕчĕк

КИНО-АППАРАТСЕМ ПУР.

Çак кино-аппаратсем електросетĕн тĕрлĕ напрйаженипе — 12, 120—220 вольт—ĕçлеççĕ. Аппарат хакĕ 100 тенкĕ.

Аппаратсем шкулсенче, музейсенче, выставкăсенче кăтартма пит лайăхскерсем.

УЙРĂМĂН ÇАКĂН ПЕК КИНОЛЕНТĂСЕНЕ СУТАÇÇĔ:

Абиссиния, Муха—Цокотуха, Что нужно знать о ПВХО, Реконструкция Москвы, Противогазовая защита. Викторина ПВХО, Волк и Лиса, Как мы ходили за грибами.

Киноленткăсен хакĕсем 10 тенкĕрен пуçласа 30 тенкĕ таран.

Çав складрах йăвăç пичкесемпе фанер барабансем сутаççĕ.

АДРЕС: г. Канаш, Базарная площадь, контора центрального аптечного склада. Телефон № 66.

Администраци.

2—2

ПĔЛТЕРНИ

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн Тĕп дезинфекци станцийĕ тата хула совечĕ Шупашкар хулинчи мĕн пур учрежденисене, вĕсен дезинфекци аппаратури, дезинфекци камери тата дезинфекци тумали ытти инвентарсем пур пулсан, çакăнта кăтартнă формăпа Тĕп Дезостанцине сведĕнисем тăратма хушаççĕ:

№№ йĕрки	Йачĕсем	Хисепĕ	Йурăхлăхĕ	Хăш вырăнта	Асăрхаттарни

Çÿлте кăтартнă дезинфекци тумали хатĕрсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн Дезостанци вĕсемпе усă курма йурани çинчен йатарласа ирĕк парать.

Сведĕнисене кăçалхи декабĕрĕн 25-мĕшчен йышăнаççĕ.

Кăтартнă срук хыççăн та регистрацилемен дезинфекци тумали хатĕрсем пуррине тупса палăртсан вĕсене пуçтарса илеççĕ.

Сведĕнисем тăратмали адрĕс; ул. Новая, дом № 16.

Хула совет председателĕн заместителĕ Матросăв.

Тĕп Дезостанци директăрĕ Рошко.

2—2

Уполномоченный Чувашглавлита № 583. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпр ома ЧАССР., заказ № 881 ф. б. 58×84 п. л: